Раççей Президенчĕ Владимир Путин пĕрремĕш шалăвне ССОра ĕçлесе илнĕ ● 5 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*


ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

45 (863) №, 2014, ноябрь, 8

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



Илемлĕ фильм… стройкăна илсе çитернĕ. 2 стр.

Тăлăхсен шучĕ чакать. 3 стр.

Вĕсене вăрçă çулăмĕ те кĕллентерeймен. 4 стр.

Хурлăхан мĕншĕн авăнать? Ыхра валли “кĕрĕк” хатĕрлеме пĕлетĕр-и? 8 стр.

Манăн кинĕм çавнашкал. 9 стр.

XX ĕмĕрти чи ясар арçын пурнăçĕнче 3 пин ытла хĕрарăм пулнă теççĕ… 11 стр.




● СТУДЕНТСЕН ПАЯНХИ СТРОЙОТРЯЧĔ.


5 стр.


# “Ĕç семестрĕ” çамрăксене пурнăç путевкипе тивĕçтернĕ

*ССО юхăмĕ йĕркеленнĕренпе 50 çул çитнĕ май*

**Паянхи сăмаха пуçличчен кăштах историе тавранса çаврăм тăвар-ха. Халĕ ĕнтĕ иртнĕ ĕмĕр тесе çырма тивет. 1959 çул. М.В.Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕн 339 студенчĕ çуллахи каникул вăхăтĕнче Çурçĕр-Казахстан облаçĕнчи çерем çĕрсене уçма тухса кайнă. Çав тăрăхри совхозсенче çамрăксем 250 пин тенкĕлĕх 16 объект çĕкленĕ. Çапла пуçланнă студентсен строительство отрячĕсен юхăмĕ – ССО…**

Çак отрядсем яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа кĕлетке енчен тĕрекленме кăна мар, чунпа та пиçĕхме пулăшнă. Студентсемшĕн вăл чăн-чăн пурнăç шкулĕ пулса тăнă. Ун витĕр тухнисем каярахпа та çухалса кайман, тĕрлĕ тытăмра ертӳçĕре вăй хунă. Раççей Президенчĕ Владимир Путин хăйĕн пĕрремĕш шалăвне ниçта та мар, шăпах стройотрядра ĕçлесе илнине каласа кăтартать. “Эпир Коми тăрăхне кайнăччĕ. Унта ЛЭП валли йывăççем касса çаратнăччĕ, пурăнмалли çуртсем çĕкленĕччĕ, вĕсенче юсав ĕçĕсем ирттернĕччĕ. Астăватăп, вăл вăхăтшăн тĕлĕнсе каймалла нумай укçа ĕçлесе илнĕччĕ эпĕ – 1 пин тенкĕ. Ун чухне, астăвасса, машина хакĕ 4 пинпе танлашатчĕ. Чăн та, çав укçапа йĕркеллĕ усă курма пĕлмерĕм, мĕнле тăкакланине каламăп”, – паллаштарать Президент асаилĕвĕпе “Российская газета” хаçат.

Пирĕн республикăра студентсен çак юхăмĕ 1964 çулта вăй илнĕ. Чăвашри аслă шкулсенче вĕренекен 70 çамрăк çуллахи каникулта стройкăсенче вăй хунă. 90-мĕш çулсен тĕлнелле ССО чăваш çамрăкĕсен хушшинче те анлă сарăлнă. Çавна май, паллах, çак юхăма йĕркелесе пыракан та кирлĕ пулнă. ВЛКСМ обкомĕ координатор яваплăхне хăй çине илнĕ, ун çумĕнче студентсен стройотрячĕсен штабĕ йĕркеленнĕ. Унăн пĕрремĕш командирĕ Фарид Сулейманов пулнă.

Кĕçех техникумсенче те отрядсем йĕркеленме пуçланă. Чăваш студенчĕсен ури пусман çĕр те юлман-тăр: республикăра объектсем çĕкленипе пĕрлех вĕсем чикĕ леш енне те çитнĕ – Аçтăрхан, Волгоград облаçĕсенче, Молдовăра помидор пуçтарнă, Венгрирен, Эстонирен, Казахстанран хисеплĕ ялавсемпе таврăннă. Çамрăксем хастарлăхпа палăрнă – тепĕр чухне организацин çур çуллăхри планне тултарнă! Юхăм аталансах пынипе çамрăксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленĕ. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем хăйсенчен никама та ирттермен.

*Ялан ăспа çӳресен атте-анне ятламасть.*

**Каларăш.**

## ÇАНТАЛĂК



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 08.11 | + 3 | + 1 |
| 09.11 | + 5 | + 3 |
| 10.11 | + 2 | + 1 |
| 11.11 | + 2 | 0 |
| 12.11 | + 3 | + 2 |
| 13.11 | + 3 | + 3 |
| 14.11 | + 1 | – 3 |



ШĂПА

# Илемлĕ фильм витĕмĕпе

**Апла-и, капла-и, ырă-и, начар-и килет çыннăн пурнăçĕ, темле пулсан та эпир кашниех юмахра пулса куратпăр. Манăн шухăшпа нумайăшĕ çакăнпа килĕшессĕн туйăнать. Çапла мар-и-ха, туссем? «Эх, еплеччĕ ун чухне... Ах, мĕн тери телейлĕччĕ... Чăннипех манпа пулнăччĕ-ши çавă?..» Кам аса илмест пулĕ асамлă çав туйăма, çамрăклăха, çунат сарса тӳпере вĕçнине...**



**Çĕрпӳ районĕнчи Метикасси ялĕнче çуралса ӳснĕ Римма Константинова. Вăрçă умĕн пĕр çул маларах, 1940 çулта, çуралнă. Çемье йышлă пулнă вĕсен. Пĕтĕмпе – вун пĕр ача. Пĕчĕкрен колхозра ĕçлесе ӳснĕ. Çичĕ класс пĕтерсен хĕр Шупашкара, тăванĕсем патне килнĕ. Аллинче унăн çаврака хура çăкăр пулнă.**

Хулана çитсен Римма пӳрт купаланине курать. Пилĕк хутлă çурт тăрринче каска тăхăннă çамрăксем ĕçлеççĕ. Савăнăçлăн калаçни, кулни, шӳтлени илтĕнет. «Епле çӳллĕ, хăрамаççĕ те-ши вĕсем? Курха, «Высота» ятлă кинори пекех-çке», – шухăшлать çăкăрне кăкăрĕ умне тытнă хĕр ача.

Ăçта каяс-ха ĕçлеме? Паллах, стройкăна. Унта пурне те илеççĕ. Тĕрлĕ ĕç тăвакан кирлĕ. Римма стройкăра тăрăшать, каçхи шкулта малалла вĕренет. Телее, вăл стройкăра Социализм Ĕç Геройĕ Михаил Иванов патне лекет. Вăл пулăшнипе каменщике вĕренет.

Çапах таçти шалти ĕмĕт канăç памасть ăна. Хĕр мĕн пĕчĕкренех артистка пулма шухăшланă-çке. Шкулта вĕреннĕ чухнех ташă-юрă енĕпе палăрнă. Хаçатра пĕлтерӳ курах каять вăл: балет студине çамрăксене вĕренме илеççĕ. «Шывармань» опера лартма хатĕрленеççĕ.

Ĕçрен таврăннă чухне хăю çитерсе театра кĕрет Римма. Йĕлтĕр пек калуш, пысăк çăматă, шăлавар тăхăннă хĕр питĕ пăлханать. Унăн пултарулăхне комисси членĕсем тĕрĕслеççĕ. Ташлама сĕнеççĕ хăйхине. Çăматтине хывать хĕр, çав вăхăтра чăваш кĕвви хыттăн кĕрлесе каять. Римма пурин çинчен те манса кайса ташша яра парать...

Виççĕр çамрăк ыйту çырнăмĕн, пĕтĕмпе вара вăтăр пĕр çамрăка çеç суйласа илеççĕ. Римма та вĕсен йышне лекет. Кунта вăл паллă юрăçпа Тамара Чумаковăпа, Борис Марков режиссерпа паллашать. Ĕçлет, вĕренет, эрнере икĕ-виçĕ хутчен театра çӳрет. Хăйне чăнчăн юмахри пек туять.

Каçсерен ăна Метикасси каччи Аркаша театртан кĕтсе илет. Çирĕм пĕррери хĕрпе каччă часах пĕрлешеççĕ. Риммăн çие юлать. Йыш хушăнсан театрпа сыв пуллашма тивет унăн.

Çав вăхăтрах мăшăрне виçĕ çуллăха салтака илсе каяççĕ. Римма строительсен техникумĕнчен вĕренсе тухса алла диплом илет. Ăна мастер, прораб ĕçне шанса параççĕ. Хастар та çаврăнăçуллă чăваш хĕрĕ ырми-канми ĕçлет, тăватă ача çуратать. Анчах телей нумая пымасть, мăшăрĕ сарăмсăр вилет. Вăтăр виççĕри хĕрарăм апат çиейми пулать.

– Малалла пурăнмашкăн ăçтан вăй-хал тупрăн? – ыйтрăм Римма Константиновăран.

– Ĕç çăлса хăварчĕ, – терĕ вăл. – Юратнă ĕç.

– Стройкăра çăмăл мар-çке.

– Чăн та, çăмăл марччĕ. Анчах мана шăпах ĕç çăлса хăварчĕ. Маçтăр та, прораб та пулнă эпĕ. Ăста специалист тесе мана çуртсем тунă çĕре янă. Чертежсене вулама çивĕч куç кирлĕ. Ăна кашниех пултараймасть. «СУ-29» организацире пурте хисеплетчĕç, шанатчĕç.

– Çапах яваплă та йывăр ĕç суйлама мĕн хавхалантарчĕ?

– Кино, – йăл кулать Римма Константинова. – «Девчата», «Высота» тата ытти фильма темиçе хутчен те пăхаттăмăр. Пирĕн те вĕсем пек пурăнас килетчĕ.

– Романтиксем пулнă ĕнтĕ, – килĕшетĕп унпа.

...Римма Степановна тăван яла таврăнать. Кунта çĕнĕ вăйпа ĕçе пуçăнать. Вăл шкулсем, фермăсем тунă çĕрте тар тăкать. Клуб, ача сачĕ туса пĕтереççĕ. Совхозăн тĕп строителĕ ниммĕнле ĕçе те тиркемест.

Тивĕçлĕ канăва тухсан та çурт хăпартнă, çынсене кăмакасем туса панă. Халĕ те ахаль лармасть вăл. Вылăх-чĕрлĕх усрать, ачисене пулăшать. Каçхине чăвашла тумланса клуба юрлама каять.

Тăпăлкка кĕлеткеллĕ, ăшă чунлă хĕрарăмпа чуна уçса калаçма питĕ кăмăллă пулчĕ. Кашни çын хăй пĕр тĕнче тетпĕр-çке. Вĕсем пуррипе тĕнче илемлĕ. Çавăн пек маттур чăваш хĕрарăмĕпе мăнаçланас килет.

**Лидия САРИНЕ.**

ХАСТАРСЕМ

# Шӳтлеме ăста шур сухал

Шупашкарти педагогика институтĕнчен вĕренсе тухсан Патăрьел районĕнчи тĕрлĕ шкулта математикăпа физика вĕрентнĕ Владимир Марков.

– Вĕри чĕреллĕ пулнăрантăр пенсие тухсан та килте ларайманăм, – тет вăл кулса.

Общество пурнăçĕ уншăн малтан та ют пулман-ха, халĕ вара пушă вăхăтне ял тăрăхне тирпей-илем кӳрессипе, халăха савăнма уявсем йĕркелессипе ирттерет. Масар çинче йĕрке туса тăрать. Ара, Владимир Петрович Кĕçĕн Патăрьел старости-çке. Ял пухăвĕнче ăна суйланăранпа икĕ çул çитнĕ. Вăл вара ку тивĕçе ĕмĕрĕпех пурнăçланă.

Мăшăрĕпе 3 ача çуратса ӳстернĕ вĕсем. Шел, Тамара Владимировна чире пула тăванĕсенчен 2008 çулта уйрăлса кайнă. Паян шур сухал ывăлĕн çемйипе пурăнать. Чăваш йăлине тĕпе хурса кĕçĕнни тĕп килте тымар янă. Ултă мăнукĕпе чунран савăнать староста.

Утмăл пиллĕкмĕш çулта пыраканскер вăтăсене тимлĕхсĕр пĕрре те хăвармасть. Май пур таран пулăшать. Кишĕр-кăшман кăлармалла-и, çĕр улми пуçтармалла-и – аслă ӳсĕмрисене ыра тума яланах хатĕр вăл. Хĕрарăмсем те канашпулăшу ыйтма пĕрмаях пыраççĕ-мĕн.

– Акă паян ирхине те пĕр кинемей килчĕ. Купăста тӳме шухăш тытнă та тепке шырать. Тутăхнăскерне йышăнасшăн мар, тасатса-хăйраса памалла тет. Вăхăт çук тесен те лăпланмасть, палăртнине пурнăçласшăн-çке, – шӳтлешӳтле сăмахлать Владимир Петрович. – Итленине кура пĕрре те ахаль тăратмаççĕ.

Шӳтлесе-кулса пурăнсан ĕмĕр чăнласах та вăрăмланасса шанать-тăр – пĕрмай шӳтлет, калаçать. Пĕр сăмахпа, ырăлăх тапса тăрать унра.

Ял сăн-сăпатне тимлекенскер ачасене шашка-шахмат вăрттăнлăхĕсемпе те паллаштарать. Патăрьелĕнче ку вăйăсемпе кăсăкланакансем валли кружок ертсе пырать. Шур сухал патĕнче ăсталăхне 15 ача туптать.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.



КУН-ÇУЛ

# Кашкăр çименскер...

**Пурнăç нуши çынна тем те кăтартать. Çĕнĕ Пуянкассинче пурăнакан Улька çинчен çырса кăтартасшăн эпĕ.**

Вăл 1930 çулта çуралнă. Вĕсен ашшĕ Ефим пичче икĕ хутчен авланнă. Малтанхи арăмĕнчен виçĕ ачапа юлнăскер 1928 çулта Йăнтăрчă хĕрĕпе çемье çавăрнă. Хĕрарăм та малтан Сăхăтпуçа качча тухнă. Упăшки сарăмсăр вилнĕ, ачи те чире пула çут тĕнчерен уйрăлнă. Чукçырми ачипе тепĕр ывăл ача çуратнă. Упăшки путсĕртен уйрăлма тивнĕ. Арçын ĕçе кайнă чухне: «Эпĕ килнĕ çĕре килте ан пул», – тесе хăварнă. Арăмĕ тарăхнипе япалисене пуçтарнă та икĕ эрнери ачине пăрахсах тухса кайнă. Çав ача те ӳснĕ, те вилнĕ – никам та пĕлмест. Ефим пиччепе иккĕшĕ тепĕр виçĕ ачине кун çути парнеленĕ. Шел, пĕри пĕчĕклех вилнĕ.

Колхоза кĕменскерсенчен налук тӳлемен тесе хуралтисене пĕтĕмпех туртса илнĕ. Кун хыççăн Ефим пичче ĕçлеме тухса кайнă. Йывăр ĕçпе шухăша пула 60 çула çитсен ачисене тăлăха хăварнă. Çимелли çукран, вутă пĕтнипе кăмака хутаймасăр нушаланса çитнĕскерсем колхоза кĕнĕ çапах та. Вăл вăхăтра хуçалăхсенче лару-тăру çăмăл пулман. Ĕçлекенсене тыра сахал панă. Амăшĕ те шăннипе суккăрланса юлнă. Выçлăх хистенипех Улька аппа ыйткалама ют ял тăрăх кайнă.

– Çулла. Ывăннипе пĕрене çине выртрăм та çывăрсах кайнă. Пите тем çулланипе вăрантăм. Кашкăр иккен. Эпĕ хускалсан пăрăнса кайрĕ...

Тепрехинче Кивĕ Пуянкассине кайнăччĕ. Ун чухне çуркунне. Пирĕн ялпа Кивкас хушшинче çырмара шыв кĕрлесе юхатчĕ. Киле таврăннă чухне ун урлă сикме тăтăм та – каçăймарăм, пăр катăлчĕ. Шыв сарăлса юхнă вырăнта эпĕ ларакан пăр татăкĕ айккинелле шуса пычĕ те çыранран çакланса юлчĕ. Упаленсе çĕр çине тухрăм. Хам йĕп-йĕпе, шăнса хытнă. Ялалла чупнă май: «Мана Турă вилмелле туман пулĕха. Кашкăр та çимерĕ, шывран та тухрăм», – шухăшлатăп хам, – каласа кăтартать Улька аппа.

Çитĕнсен колхозра ĕçленĕ вăл: чăх, сурăх, сысна пăхнă, ĕне сунă. Хăмла ӳстернĕ. Вăрман касма та кайнă. Тырă çапнă. Пĕр ĕçрен те пăрăнман.

– Начар пурăннăран тăхăнмалли çукрахчĕ. Çавăнпах çамрăксемпе хутшăнсах кайман эпĕ. Çулсем чылай шусан тин хамран 7 çул кĕçĕн йĕкĕте качча тухрăм. Вăл та ман пекех тăлăхчĕ. Çурчĕ кивĕччĕ. Вăрман кăларса çĕнĕ пӳрт аран лартрăмăр. Упăшкапа килĕштерсе пурăннă эпир. 18 çул пĕрле кун кунласа ултă ача çуратнă. Анчах мăшăр сывлăхĕ начар пирки пиртен ир уйрăлса кайрĕ. Кĕçĕн хĕр виççĕ те тултарманччĕ-ха ун чухне. Ачасем ӳснине те кураймарĕ мăнтарăн. Ывăл 25 çулта сарăмсăр вилчĕ. Пилĕк хĕре пĕччене ӳстерсе çын турăм. Шухăшлатăп та – тӳсĕм епле çитернĕ-ши тетĕп?

Пĕррехинче вăрман касса килсен аптăрарăм. Йывăр çын хам. Фельдшер патне кайрăм та мана больницăна кайма хушрĕ. Çанталăк япăх, пылчăклă. Тăвай больницине çуран çитрĕм. Çурçĕр иртсен ача çуратрăм. Пепкем чĕрĕ-сывă иккенне илтсен чун кĕрсех кайрĕ, – аса илет вăл нушаллă кун-çулне. – Паян лайăх пурăнма майсем пур. Йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма ачамсене вăй-хал сунатăп, – тет Улька аппа.

**М.СТЕПАНОВА.**
Тăвай районĕ.



САМАХ ПАРĂР-ХА

# Тавралăх илемĕ – пирĕн пуянлăх

Марина ТУМАЛАНОВА

**Çут çанталăк ытамĕнче канлĕ те лăпкă. Ахальтен мар вĕçĕ-хĕррисĕр анлăш илĕртет пире. Чăнахах, тăван тăрăхран хакли нимĕн те çук.**

**Йĕри-тавралăха хăтлăх кĕртни пирки нумай çыратпăр-калаçатпăр. Акă, тĕслĕхрен, Çĕрпӳ районĕнчи Кăнарти Лидия Федорова тăванлăх сукмакĕ йĕркелени пирки каласа кăтартнăччĕ. Ашшĕ пĕвеленĕ пĕве хĕррипе иртет вăл. Йыш хушăнсан çакăнта пĕрер йывăç лартаççĕ вĕсем. Кану вырăнĕнче 100 ытла хунав вăй илнĕ. Пĕвере хур-кăвакал пулă тытса çинине сăнать ял-йыш. Ку тăрăх ахаль те вăрманпа пуян. "Шупашкар çыннисем те кăмпа, çырла, майăр пуçтарма килеççĕ", – палăртрĕç Кăнарсем. Тĕрĕсех, вăрман ырлăхĕ пурин валли те çитет.**

**Кашни тăрăхрах ушкăнăн-ушкăнăн йывăç лартни ырă пулăма çаврăнчĕ. Ку ĕçе шкул ачисене явăçтарни, сăмахран, çут çанталăка хаклама вĕрентет. Çитĕнекен ăру каярахпа çак лаптăка пăхса тăрать. Республикипех çамрăк экологсен юхăмĕ вăй илни те савăнтарать. Хăйсен опычĕпе ыттисене паллаштараççĕ вĕсем.**

**Нумаях пулмасть республика шайĕнчи "Çут çанталăкăн хăйне евĕрлĕ кĕтесĕ" пултарулăх конкурсне пĕтĕмлетрĕç. Жюри членĕсем сăн ӳкерчĕкесемпе схема-картăсене тишкерчĕç. Комсомольски районĕнчи Александровкăри Анастасия Алякина тата Дмитрий Зайцев, Хĕрлĕ Чутайри Анастасия Иванова çĕнтерчĕç. Хăйсен тăрăхĕнчи чуна çывăх вырăнпа паллаштарнă вĕсем. Анастасия Алякина Кĕтне юхан шывĕн кивĕ çулне кăтартнă. Дмитрий Зайцев Турă Амăшĕн таса çăлкуçне сăнланă. Анастасия Ивановăшăн Симĕс уçланкă – чи илемлĕ вырăн. Манăн çийĕнчех çав вырăнсене çула тухас шухăш çуралчĕ. Мĕнлерех-ши унта? Çав илем, ахăртнех, пурне те тыткăнлĕ.**

**Çут çанталăкăн хăйне евĕрлĕ кĕтесне курма, хаклама, кăтартма пĕлни нимрен пĕлтерĕшлĕ. Çакă йăлтах – пирĕн пуянлăх.**

**"Раççей аллейи" акцин кăтартăвĕсем те паллă. Тăватă уйăх каялла пĕлтернĕ сасăлавра кашниех хăйĕн шухăшне палăртма пултарчĕ. Регион палли пулма тивĕçлĕ ӳсен-тăрана республикипех суйларăмăр. Пирĕн тăрăхри 11 пин çын хутшăнчĕ ку ĕçе. Хăмла чи нумай сасă пуçтарчĕ. Халăхăн 36 проценчĕ шăпах çак ӳсен-тăраншăн сасăланă. Юман – иккĕмĕш вырăнта /34 процент/. Хăва, çăкапа салтак тӳми хыça юлнă.**

**Сăмах май, сасăлава Раççейри 3,5 миллиона яхăн çын хутшăннă. Акци йĕркелӳçисем палăртнă тăрăх – кашни регионăн паллисене уйрăм парксенче кăтартĕç. Малтанхи аллейăсене Мускаври тата Севастопольте лартĕç. Вĕсене çитес çулхи Аслă Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне уçма палăртнă.**

**Мала тухнă ӳсен-тăрана çавнашкалах экологи тата вĕренӳ проекчĕсенче, онлайн-энциклопедире, вĕренӳ кĕнекисенче кăтартĕç. Çĕнтерни кирек хăшĕ те архитектура тата истори палăкĕсемпе пĕр шайра пулнине çирĕплетет.**

**Чăваш Республикин, Шупашкар хулин, Куславкка районĕн гербĕ çинче хăмла ӳкерчĕкĕ. Çакă та наци пуянлăхне сăнлать.**

**Ваттисем калашле, пĕр пахчари хăмлан та сăри пĕр пек мар. Унсăр пуçне кашни кил хуçи арăмĕн – хăйĕн вăрттăнлăхĕ. Хаклă хăнана кăпăклă сăрапа сăйлассине йăлана кĕртнĕ чăваш.**

**Çапах халĕ ялсенче сăра вĕретекен сахал. Етĕрне районĕнчи Пушкăртсем юрай сăри тума вĕрентсе янăччĕ. Ку енĕпе Трифоновсем уйрăмах ăста. Нӳхрепри юр çинче ларакан сăра çăвĕпех хăйĕн пахалăхне çухатмасть, ăш хыпнине ирттерет.**

**Кĕр сăри – чăваш халăхĕн увăĕ. Унăн йăли-йĕркине те манăçа кăларма юрамасть пирĕн.**

**Çут çанталăк министерстви йĕркелекен конкурссене хутшăнма кая юлман-ха. Апла тăк кашниех хăй тавралăхăн пĕр пайĕ пулнине çирĕплетме пултарать. "Çут çанталăк куçĕпе" карикатура конкурсĕнче кам çĕнтерĕ-ши тата?**

**Çут çанталăка упрас, йĕри-тавралăха хăтлăлатас ĕçе тӳпе хывни – ыттисемшĕн тĕслĕх. Çак илем ан иксĕлтĕрччĕ кăна.**

ХӲТЛĔХ

# Тăлăхсен шучĕ чакать

Кĕçнерникун Иван Моторин премьер-министр РФ Правительствин Председателĕн заместителĕ Ольга Голодец ертсе пынă видеоконференци-канашлăва хутшăннă. Унта тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă ачасене çемьесене вырнаçтарас ыйтăва пăхса тухнă.

Канашлăва уçнă май Ольга Голодец Раççей Федерацийĕнчи мĕнпур регион тăлăхсене усрава илессипе çулран çул аван ĕçленине палăртнă.

Влаç, опекăпа попечительство органĕсем, социаллă тата общество организацийĕсем çине тăрсах тăрăшнипе Чăваш Енре тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă ачасен шучĕ çулсерен чаксах пырать. Çакă, паллах, савăнтарать. Ача çурчĕсемпе интернат шкулсенче пурăнакансен шучĕ 2010 çултанпа икĕ хута яхăн чакнă.

Чăваш Енре кĕске хушăра ятарлă /коррекци/ 4 интернат шкул /Куславккари, Октябрьскинчи, Чурачăкри, Улатăрти/ тата 3 ача çурчĕ /Куславккара, Канашра, Етĕрнере/ хупăннă. Паян республикăра 3 ача çурчĕ тата вĕрентӳ тытăмĕн ятарлă /коррекци/ 8 интернат шкулĕ, сусăррисен 2 ача çурчĕ тата социаллă хӳтлĕх тытăмĕн 1 ача çурчĕ ĕçлет.

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре ача усрава илнĕ 721 çемьере 1099 шăпăрлан пурăнать. Çавăн пекех опекун тата попечительсен 1661 çемйинче 1949 ача воспитани илет. Кăçал вĕсенчен 225-не çемьене панă.

Ача усрава илнĕ ашшĕ-амăшне уйăхсерен ĕç укçипе тивĕçтереççĕ: 1-2 ачашăн – 3295 тенкĕ, 3 тата ытларах ачашăн – 4680 тенкĕ. 3 çула çитмен тата сусăр ачашăн уйăхсерен чи пĕчĕк ĕç укçин 50 процентне хушса тӳлеççĕ.

Чăвашсем тăлăхсене авалтан пăрахман. Килĕнче выçăллă-туталлă пурăнсан та хӳтлĕхсĕр юлнă пепкесене хӳтте илнĕ, ӳстернĕ, ĕçе вĕрентнĕ. Тăлăх валли çемьере пĕр касăк çăкăр чĕлли кирек хăçан та тупăннах. Ырă çак пулăм чăваш хушшинче паянхи кунччен упранса юлни, шăпăрлансене çемьене илсе ăшăлăхпа юрату парнелени савăнтарать. Ача усрава илессипе пирĕн регион Раççей Федерацийĕнче ахальтен палăрман пулĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

КУЛЬТУРА

# Лайăх проектсем

Раççей Федерацийĕн Культура министерстви регионти тата регионсен хушшинчи проектсене пурнăçа кĕртмешкĕн хушма укçа уйăрма палăртнă. Вăл пирĕн тăрăхра культурăпа туризма аталантарма пулăшĕ.

Килĕшӳ тăрăх 2014 çулти Чăваш Республикинчи культура пулăмĕсен марафонне йĕркелеме 8,6 миллион тенкĕ куçĕ. Çак тытăмăн учрежденийĕсене аталантарма 20,6 миллион тенкĕ пăхса хăварнă. Федераци хысниччен килекен укçапа ятарлă оборудованипе транспорт туянма та май килĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

КĂТАРТУЛĂХ

# Ача сачĕ хута кайĕ

Раççей Федерацийĕн Правительствин ларăвĕнче бюджетсен хушшинчи трансфертсен мелĕпе 3 миллиард та 484 миллион та 199 пин тенкĕлĕх грантсене Раççейĕн 20 субъекчĕ хушшинче валеçнĕ. Çак йыша чи тивĕçлисене кĕртнĕ.

Рейтинга хатĕрленĕ чухне çак кăтартусене шута илнĕ: çынсен пурнăçĕн тăршшĕ тата тупăшĕ, ĕçсĕрлĕхе чакарни, вĕрентӳ пахалăхĕ, ачасем тăлăха юласран сыхланмалли профилактика, хута янă пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкĕ. Çавнашкалах уйрăм çынсем хывнă инвестицисен калăпăшне, регионсен бюджечĕсене кĕнĕ налуксен тата ытти тӳлев висçине, пĕчĕк тата вăтам бизнес аталанăвĕн шайне, социаллă ыйтăмсен пĕтĕмлетĕвĕсене шута илнĕ.

РФ Правительстви хакланă тăрăх – Чăваш Республики пĕтĕмĕшле кăтартусемпе 14-мĕш вырăн йышăннă, çакăншăн 165 миллион та 59 пин тенкĕ грант илĕ.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕ тухăçлă ĕçленĕшĕн тивĕçнĕ укçапа Шупашкарта ача сачĕ çĕклеме палăртнине пĕлтернĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ӲНЕР

# Çамрăксене пулăшас тĕллевпе

Çĕршывра çулсеренех "Раççейĕн пултарулла çамрăкĕсем" ятпа конкурс иртет. Унта мĕнпур регионти ача-пăча ӳнер шкулĕсенче вĕренекенсем тата культурăпа искусство вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ пухакан студентсем хутшăнаççĕ.

Конкурса пултарулла ачасемпе çамрăксене тупса палăртас, вĕсене пулăшас тĕллевпе федерацин "Раççей культури" тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн ирттереççĕ, 12-рен тытăнса 25 çула çитичченхи çамрăксен ĕçĕсене йышăнаççĕ.

Шупашкарти ӳнер училищин студенчĕ Роман Нестеров шăпах çак конкурс çĕнтерӳçи пулса тăнă. "Декораципе ал ĕç искусстви тата халăх промыслисем" специальноçе суйласа илнĕ ытăн алăллă çамрăк 4-мĕш курсра вĕренет. Вăл тăмран тĕрлĕ савăт-сапа йăвалама, ӳкерме, çавăн пекех йывăçран тĕрлĕ хатĕрхĕтĕр касса кăларма, хăрăк турата "чун кĕртме" ăста.

**Елена МИШИНА.**

НАРКОТИК

# Тĕпсĕр авăра ан лекĕр

Раççейре кăçалхи кĕркунне çĕнĕ йышши наркотикпа /туртмалли хутăшпа/ наркăмăшланнă 800 ытла тĕслĕх тупса палăртнă. Çак амак Чăваш Енре пурăнакансене те шар кăтартни çинчен хаçатра çырнăччĕ. Сентябрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа республикăри 100 ытла çын /вĕсенчен 20-шĕ – 15-17 çулти çамрăксем/ сывлăх сыхлавçисенчен пулăшу ыйтнă. Вĕсем пурте – 18-30 çултисем. Çак йышран 90 проценчĕ – 18-21 çулта. Ытларахăшĕ ниçта та ĕçлемест, вĕренмест е вăхăтлăх ĕçе вырнаçнă.

Ку наркотике тутаннисен ăстăнĕ арпашăнать, сывлăш пӳлĕнет, шăнăр туртать, куç çивĕчлĕхĕ чакать. Çак вăхăтра иккĕшĕн пурнăçĕ татăлнă. Çавна май уголовлă ĕç пуçарнă. Айăплисене 6 çул таран ирĕксĕр хăварма пултараççĕ. Çитес вăхăтра саккуна улшăну кĕртесшĕн, çĕнĕ йĕрке çирĕпленсен вара наркотик сутакансен ĕмĕрĕпех кирпĕч шутлама тивĕ.

Туртмалли хутăшăн сиенĕ çинчен ытларах пĕлни пăсмасть. "Вилĕм сутакансем" хăйсен таварне улталаса сĕнме пултараççĕ. Кирек мĕнле наркотик хăйĕн аварне туртса кĕни пирки те манмалла мар.

Чăваш Республикин прокуратури йĕрке хуралçисемпе, патшалăх влаçĕн тата хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле ноябрĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 17-мĕшĕччен "Вилĕм ăçта сутнине пĕлтер" акци ирттерет. Вăл наркотик çеç мар, ăс-тăна арпаштаракан ытти хутăш çаврăнăшне тупса палăртма пулăшĕ.

Наркотикпа айкашакансем пирки "шанăç телефонĕсемпе" /39-20-12, 62-48-49, 23-01-00, 24-16-55/, СМС-çырупа /8-937-013-93-41/, электрон çырупа /prokur@cap.ru/ ята палăртмасăр пĕлтерме пулать. Унсăр пуçне халăх йышлă çӳрекен вырăнсенче çыру ямалли ещĕксем вырнаçтарнă. Прокуратура ĕçченĕсем çак амакпа пĕрле кĕрешме чĕнсе калаççĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

ВИÇ КĔТЕСЛĔ ÇЫРУСЕМ

# Вĕсене çулăм та кĕллентереймен






**Аллăмри сарăхнă çырусен йĕрĕпе шухăшлавра ăçта кăна çитсе килмерĕм-ши? Етĕрне районĕнчи Пушкăрт каччин Михаил Васильевăн чун ыратăвне чĕре витĕр кăлартăм. Унăн кун-çулĕпе кăсăклантăм.**

**Çуралнă тăрăхшăн тунсăхлакан, çывăх çыннисемпе ялйыша хисеплесе юратакан çамрăкăн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен янă çыру сыпăкĕсене чăвашла куçарса пичетлетпĕр. Вĕсем пушарта та çунман. Çулăм чĕлхи кăна хут çине йĕр хăварнă. Пурпĕрех çакă кашни йĕркене ăша хывма чăрмантармасть. Уявпа саламласа çырнă открыткăсем те чиперех сыхланса юлнă.**

**Вăрçă пуçланиччenхи çырусенчен Михаил Васильевич Мускавра ĕçлени, командировкăна тĕрлĕ хулана çӳрени паллă. Шăллĕсем çинчен ытларах пĕлесшĕн вăл. "Никодим шкул пĕтерчĕ-и? Иван авланма шухăшлать-и?" – çине-çинех ыйтса çырать çывăх тăванĕ. Çырусене йăмăкĕн Клавдия, шăллĕсен Иванпа Никодим ячĕпе янă. Кашнинчех хăйĕн сăмахне ашшĕ-амăшне, ытти тăванне сывлăх суннинчен пуçланă Михаил Васильев.**

*"Манăн Пензăра юлас килмест. Анчах çырăнмасăр пĕрле пурăнакан арăм кунтан ниçта та каясшăн мар. Унăн тăванĕсем мана çакăнтах тĕпленме ыйтаççĕ. Арăмăн ашшĕ кашни кун тенĕ пекех ӳсĕр килет. Ку мана килĕшмест.*

*Иван, эсĕ те авлан. Хĕре кăмăлне пăхса качча ил, унсăрăн кайран ӳкĕнĕн.*

*Çула май киле кĕрсе тухма тăрăшăп. 300-600 тенкĕпе костюм илсе тăхăнасшăн.*

*26.09.1940".*

Каярах шăрçаланă çырури йĕркесем вăрçă хаярлăхне сăнлаççĕ, пурнăçа юратнине кăтартаççĕ.

*"Япаласен пĕр пайне Саранскра Мария Ефимова патĕнче хăвартăм, ыттине Киев урлă Мускава янăччĕ, анчах ман алла нимĕн те лекмен – вакунсене бомбăсем сирпĕтсе янă ахăр.*

*Тепĕр 10-15 кунран фронта фашистсемпе çапăçма илсе кайĕç. Кун пирки каярах çырса ярăп.*

*Арăм ашшĕ-амăшĕпе юлчĕ. Ăçта та пулсан куçса кайрĕç-ши – пĕлместĕп.*

*31.01.1942. Кулебаки".*

*"Ку çырупа удостоверени ярса паратăп. Вăл çар çыннисен çемйисене тивĕçекен çăмăллăхсемпе усă курма кирлĕ пулĕ. Документсене арчара упрăр.*

*09.02.1942. Кулебаки. Чулхула облаçĕ."*

*"Пире Кулебакирен куçарса кайрĕç. Почтăна кайма май килсен укçа ярса парăп. Кунта, вăрçă хирĕнче, нухрат кирлех мар.*



**• ИВАН.**

*21.02 42. М-Ярославец".*

*"Эпĕ темиçе çыру ятăм, анчах пĕлтĕртенпе сирĕнтен хыпар çук. Иванпа Никомидăн адресĕсене пĕлтерме тăрăшăр. Тен, эпир юнашарах çӳретпĕр? Вăрçăра унашкал тĕслĕх нумай.*

*Иртнĕ эрнере почтăпа кучченеç – 5 килограмм сухари тата табак – ярса пама ыйтнăччĕ. Çĕнĕ адрес пĕлтеретĕп. Эпĕ полк штабĕн писарьне вырнаçрăм.*

*11.04.1942."*

*"Шăллăм шкул пĕтерсе пурнăçăн аслă çулĕ çине тухнишĕн çав тери савăнтăм. Малтан ялти шкулта ĕçлесе пăхăн, унтан пĕлĕве тарăнлатăн. Санăн институтра вĕренмелле.*

*Эсĕ Ивана вăрçа илсе кайни пирки çырнăччĕ. Камсемпе пĕрле тухса кайнă вăл?*

*Никодим, килте мĕнле пурăнатăр? Мĕн кирлĕ сире? Апат-çимĕç хакне те çыр. Практика мĕнле иртет? Йывăрлăхсене çĕнтерме хăнăхрăн-и?*

*Никодим, эсĕ вырăсла лайăххах пĕлместĕн. Санăн илемлĕ литература вулас пулать.*

*25.04.1942".*

*"Эпĕ Михаил Петрович Алексеевпа ăнсăртран тĕл пултăм. Вăл ялти лару-тăру çинчен кăштах каласа кăтартрĕ.*

*Никодим шкула вырнаçнишĕн кăмăллă. Иван ăçта-ши? Йывăр мар пулсассăн районти çар комиссариачĕпе çыхăнăр. Кайран мана пĕлтерĕр.*

*30.04.1942".*

*"Командирсен курсĕнче вĕренетĕп. Фронтран аякра. Иртнĕ çырура 100-200 тенкĕ яма ыйтнăччĕ. Кайран тавăрса парăттăм.*

*Тырă, улма-çырла, мăйăр ăнса пулнăччĕ-и? Çăкăр, çĕр улми çитсе пырать-и? Хамăр тата юнашар ялти çамрăксем хăш фронта лекнĕ? Йăлтах пĕлес килет. Иван хыпар ячĕ-и?*

*Никодим, сана питĕ курас килет. Эпĕ Мускавран 18 çухрăмра вĕренетĕп. Май пулсан – кил. Çула тухасси пирки маларах пĕлтер.*

*10.05.1942".*

*"Курсант саламне йышăнса илсемĕр. Эпĕ укçа ярса пама ыйтнăччĕ – ан чăрманăр. Пире кĕçех урăх вырăна куçарĕç. Ахăртнех, фронта илсе кайĕç.*

*16.07.42".*

*"Эпĕ виçĕ çĕртен – çурăмран, пĕçĕрен, урараан – аманнă. Халĕ çар госпиталĕнче сипленетĕп. 1-1,5 метртра мина çурăлчĕ – мĕнле чĕрĕ юлма пултартăм-ши – хам та тĕлĕнетĕп. 4 салтак вилмеллех суранланчĕ. Япаласем окопрах юлчĕç, хама санитарсем йăтса тухрĕç. Вĕсенех документсене киле ярса пама ыйтрăм.*

*26.08.1942".*

*"Никодим, манăн сĕнӳ-канаш йăлăхтарса çитерчĕ-и? Мĕншĕн çырмастăн? Манăн юлташсем темиçешер çыру илеççĕ – эпĕ вара кăлăхах хыпар кĕтетĕп.*



**• МИХАИЛ.**

*Никодим шăллăм, енчен те хурав илейместĕп тĕк – санпа çыхăну татма тивĕ.*

*Сывалса пыратăп. Тепĕр 2 эрнерен госпитальтен кăларĕç те хамăрăн чаçе таврăнăп.*

*29.09.42".*

*"Госпиталь хыççăн çапăçу хирне таврăнтăм. Эсир юлашкинчен куçарнă укçана илеймерĕм. Каялла яма çырса хăвартăм. Почта урлă пысăк укçа куçарма епле хăрамастăр? Малтан – 850, унтан 200 тенкĕ ярса патăр. Кĕçех йăлтах каялла тавăрăп. Укçа пирки Никодим çырса пĕлтерчĕ.*

*Иванран çыру илтĕм. Вăл киле мĕнле сăлтавпа янине каламан. Чирленĕ-и е суранланнă-и вăл? Пĕлтерĕр.*

*Йĕркеллех пурăнатăп. Суран ӳт илчĕ. Кăштах уксахлатăп. Хăш чухне пĕçĕри тимĕр ванчăкĕ канăç памасть.*

*Никодим, махоркăпа сухари ярса пама тăрăш– мана урăх нимĕн те кирлĕ мар.*

*Хальлĕхе чĕрĕ-сывă!*

*04.11.1942".*

Кашни çырăва тĕрĕслесе штамп çапнă.

Çакăн хыççăн килтисемпе çыхăну татăлнă. Яланлăхах... Михаил Васильевич хăйĕн шухăшне кĕске те усăмлă çырса кăтартнă. Пĕр сăмахпа та темиçе хут усă курман. Чăвашла та, вырăсла та лайăх пĕлнĕ.

1905 çулхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ Михаил Васильевич Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен таврăнайман. Ахăртнех, çĕнĕ 1943 çула кĕтсе илеймен вăл. Иван Васильевич та вăрçă хирĕнче пуç хунă.

Учителе вĕреннĕ Никодим Васильевич Ахманей, Мăн Сĕнтĕр, Пушкăрт шкулĕнче ĕçленĕ. Ачасене вĕрентме 25 çухрăм таран çуран çӳренĕ. Шăпах унăн ывăлĕ Владислав Никодимович мана çак çырусене кăтартрĕ. Вăл – Афганистан ветеранĕ.

Клавдия Васильевна качча тухман. Колхозра ĕçленĕ, шкула тирпейлӳçе вырнаçнă. Çут тĕнчерен уйрăличченех шăллĕпе Никодимпа пĕр çуртра пурăннă çаврăнăçуллă хĕрарăм.

Вăрçă хыççăн Васильевсем Михаилăн арăмне, ачисене шыраттарнă, анчах вĕсене тупайман.

Пушкăртсем хăйсен паттăрĕсене асран кăлармаççĕ. Васильевсен йăх тымарĕ çирĕп. Хальхи ăру çĕнтерĕве çывхартнă тăванĕсемпе тивĕçлипех мăнаçланать.

**Марина ТУМАЛАНОВА хатĕрленĕ.**
Автор тата архив сăнӳкерчĕкĕсем.

**«Чăваш хĕрарăмне» 2015 çулăн пĕрремĕш çурринче илсе тăмашкăн /январь-июнь/**
**Раççей почтин уйрăмĕнчех çырăнма пулать.**
**Хакĕ: 325,08 тенкĕ.**

# “Ĕç семестрĕ” çамрăксене пурнăç путевкипе тивĕçтернĕ

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

1973 çулта çеç ЧППУ пĕрлештернĕ отрячĕ ВЛКСМ обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тивĕçнĕ. Ĕç семестрĕ – çуллахи каникул вăхăтĕнче вăй хунине урăх епле хаклăн! – хыççăн студентсен çулсеренех ССО республика слетне пухăннă. Унта кăтартусене пĕтĕмлетнипе пĕрлех уйрăмах палăрнисене чыслаnă. Çĕршыв пултаруллă та хастар çамрăксене хавхалантарма манман. А.Ухтиярова, В.Ахрамеева, М.Кулакова “Хисеп палли” орденпа чысланă. Г.Зайцев, С.Герасимова, Н.Сергеев, В.Никифоров, Г.Миронов, Г.Липова тата ыттисем “Ĕçри хастарлăхшăн” медале тивĕçнĕ.

Пархатарлă çак юхăм çуралса вăй илнĕренпе кăçал 50 çул çитрĕ. Мĕнле пурăнаççĕ ССО ветеранĕсем паян? Мĕнле йĕр хăварнă çамрăксен пурнăçĕнче ĕç опычĕ? Мĕнпе асра юлнă ССО? Çак ыйтусене республикăри паллă çынсене хуравлама ыйтрăмăр.

**Анатолий УХТИЯРОВ, ЧР Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн ертÿçи:** “Эпĕ Чăваш патшалăх университетĕнче 1972-75 çулсенче инженер-электрика вĕреннĕ. Стройотрядпа 5 хутчен çула тухнă – комиссар та, пĕрлештернĕ ушкăнăн командирĕ те пулнă. Эпĕ вĕренме çар хыççăн кĕнĕ. Çавăнпа мана, хула ачисемпе е шкул сакки хыççăн тÿрех вĕренме кĕнисемпе танлаштарсан, ССОра çăмăлрах пулнă, паллах: ыйтусене хам тĕллĕн татса пама та, йывăр ĕçсене пурнăçлама та. Командирăн е комиссарăн тĕрлĕ яваплăха хăй çине илме тивет-çке: унăн раствор çăрса кирпĕч хума та пĕлмелле, ушкăна /унта вара 25-30 çын/ ĕç калăпăшĕпе, шалупа, унтан та ытла – хăрушсăрлăхпа тивĕçтермелле.

Студентсен отрячĕсем ĕçленипе кăна çырлахман, стена хаçачĕсем кăларнă, концертсем йĕркеленĕ, çула çитмен çамрăксене, пурнăçра йывăр лару-тăрăва лекнисене, шефа илнĕ. Сăмах май, вĕсем тĕрĕс çул çине чăнах та тăчĕç.

Асра юлнă самант тенĕрен... Эпĕ республикăра Шăмăршă тата Комсомольски районĕсенче телефон линийĕсем хывнă çĕрте тăрăшнă. Алтай тăрăхĕнче электричество кĕртнĕ çĕре хутшăннă – унта эпир выранти электриксем кивĕ оборудование пăснă хыççăн çĕнĕ йышшисене вырнаçтараттăмăр. Çамрăксем хулпуççи çине пилĕк пралук – 3 “фаза”, “нуль”, “заземлени” – çакса йывăç юпасем çине кушак пек хăпарма вĕренсе çитнĕччĕ. Каярахпа, хам тĕллĕн ĕçлеме пуçласан, çакă питех те кирлĕ пулчĕ мана. Направленипе Чулхула облаçне ĕçлеме ячĕç. Эпĕ, ĕнер кăна алла диплом илнĕ специалист, завод тĕп энергетикĕ! Калама кăна лайăх... Ĕçе пуçăннăранпа икĕ уйăх иртсен вăйлă çил-тăвăл тухрĕ. Завод хуçалăхне те хытах силлерĕ вăл. Канмалли кун ĕçе



● ССО ЧĂВАШ ЕНРИ ЮХĂМĔН ВЕТЕРАНĔСЕН ПĔР УШКĂНĔ СТУДЕНТСЕН СТРОЙОТРЯЧĔСЕМ ЙĔРКЕЛЕННĔРЕНПЕ 45 ÇУЛ ÇИТНИНЕ ХАЛАЛЛАСА МУСКАВРА ИРТНĔ УЯВРА.

чĕнсе кăларчĕç – энергипе тивĕçтермелле-çке. Анчах куратăп – электриксен бригади çанă тавăрма васкамасть. Пĕри ĕнер туйра пулнă-мĕн, тепри пумилккере, виççĕмĕшĕ чирленĕ... Пĕр сăмахпа, ĕçлеме пултаракан çук имĕш. Хăйсем пурте куç хÿрипе мана сăнаççĕ – так, мĕн тăвĕ-

ха ку çамрăк пуçлăх? Мĕн тăвĕ-мĕн тăвĕ? Эпĕ, ĕçе яланхи пекех костюмпа пынăскер, ăна ĕç тумтирĕпе улăштартăм, электрик “чĕрнине” тăхăнтăм, пралуксене хулпуççи çине çавăрса хутăм та юпа çине яланхиллех кушак пек хăпарса кайрăм. Мĕн, хăнăхман ĕç-им? Çав вырăнтине сыпăнтарса пĕтерсен çĕре антăм. “Ĕçе вĕçлени çинчен мана пырса доклад тăвăр”, – терĕм те хамăн пÿлĕме кайрăм. Пĕр сăмах чĕнекен те пулмарĕ... Çапла тивĕçрĕм эпĕ ĕç коллективĕн хисепне. Çакăн хыççăн кун пек пăтăрмаха пачах та лекмен.

Студентсен отрячĕсене хастар хутшăннисем пурнăçра çухалса кай-

марĕç. Ф.Сулейманов, сăмахран, фабрика директорĕ, А.Бородин – завод тĕп энергетикĕ, Г.Зайцев социаллă политика министрĕн заместителĕ пулнă, халĕ РФ ПД депутачĕн А.Аксаковăн пулăшаканĕ, Г.Стексов – Чăвашпотребсоюз правлени председателĕн заместителĕ, Ю.Кислов – завод



● СТУДЕНТ ÇУЛĔСЕНЧИ ТУСЛĂХ – ĔМĔРЛĔХЕ.

директорĕ, В.Андреев – кооператорсен институчĕн ректорĕ. Л.Таймасов – проректор, В.Шурчанов – РФ ПД депутачĕ... Пурне те асăнса та пĕтереймĕн. Кам пĕлмест паян РФ Федераци канашĕн членне Г.Николаевăна? Хула пуçлăхне Л.Черкесова? Çĕнĕ Шупашкарти сăра заводне çĕкленĕ Н.Егоров, Удмуртпотребсоюз правленийĕн председателĕ В.Токарев, “Сăвар” пĕрлĕх ертÿçи О.Цыпленков тата нумай паллă çын шăпах ССОра пиçĕхсе тĕрекленнĕ, пурнăçри çирĕп пĕрремĕш утăмĕсене шăпах унта тунă. Анатолий Смолин /тăпри çăмăл пултăр/, Валерий Туркай /халĕ – “Хыпар” Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп

редакторĕ/ поэтсем те хĕм сапакан йĕркисене шăпах ССОра шăрçаланă”.

**Вера ИВАНОВА /АЛЕКСЕЕВА/, “СК ТАВ” прорабĕ:** “Эпир Шупашкар районĕнче тата Алтай тăрăхĕнче ĕçленĕ. Шупашкар районĕнчи “Прогресс” хуçалăха шăпах республикăн хальхи Пуçлăхĕ М.Игнатьев ертсе пыратчĕ. Хутшăнусем аван йĕркеленнĕччĕ унпа. Ĕçшĕн ыйтатчĕ, анчах та мĕн кирлипе йăлт тивĕçтеретчĕ. Ыйтусене татса пама кăткăс марччĕ унпа, хутшăнма çăмăлччĕ. Ял халăхĕпе те туслă çыхăну йĕркеленĕччĕ: эпир пулă яшки пĕçернĕ тĕк вĕсем какай шÿрпи янтăлатчĕç, пирĕн каччăсем пулнă тăк вĕсен хĕр нумайччĕ – ара, туй ирттертĕмĕр вĕт, студента вырăнти пикепе пĕрлештертĕмĕр. Хĕр çураçма кайнă чух ас тăватăп, 1 витре çĕр çырли çĕклерĕмĕр те çула тухрăмăр – урăх мĕн пултăр студентăн? Эрех ĕçместпĕр... Çырлине те хуçалăхăн чаплă садĕнче пухрăмăр. Хам та ун чух качча тухнăччĕ кăна. Упăшкапа пурăнса та курман темелле, туй хыççăн тепĕр уйăхран ССОна тухса кайрăм. Манăн свидетельница – паян республика тулашĕнче те паллă Александр Капитоновăн мăшăрĕ Галина Ермилова /ун чухне вĕсем пĕрлешменччĕ-ха/. Упăшкапа иксĕмĕр те çамрăк, пĕр-пĕрне парăнмастпăр. Тем пулчĕ, харкашса кайрăмăр. “Уйрăлатăп!” – терĕм Галинăна. Ун чухне çамрăк çемье аркансан свидетель пулнисен... 100-шер тенкĕ тÿлемеллеччĕ. Галина çакна халĕ те кулса аса илет – вăл тем таранччен “пурăнччăрах, ан уйрăлччăрах!” тесе куляннă иккен. Ара, икĕ стипенди чухлĕ укçа кăларса хумалла пулатчĕ вĕт!

Çапах та ял каччисемпе харкашу сиксе тухрĕ пĕррехинче. Вырăнтисем пирĕннисене хĕнеме килнĕ. Кĕрнеклĕ, çÿллĕ студентсем патак çиессинчен хăраса чăл-пар тарса пĕтрĕç. Вăт çавăн чухне куртăмăр та яшсен хакне. Пирĕн отряд командирĕ хайхи Саша Капитоновчĕ. Нимĕн хăрамасăр кĕрсе кайрĕ çапăçакансен хушшине. Чи кирли – ăна ялтисем те, студентсем те пÿрнепе те тĕкĕнмерĕç! Ун чухнех çынпа калаçма-хутшăнма пĕлетчĕ çав вăл. Хисеплетчĕç ăна. Эх, пирĕннисем хăшĕ-пĕри кăвак пит-куçпа çÿрерĕ çав кайран.

Чăваш пулас мăшăра вăйăра мар, туйра та мар, ĕçре суйлама хушнă. ССОна хутшăннисен хушшинче тăватă мăшăр çуралчĕ. Пурте питĕ туслă пурăнаççĕ».

**Людмила ЧЕРНОИВАНОВА /ПУХОВА/,** “Уяв” ушкăнра юрлать: «ССОра туптаннă туслăх ыттисенчен çирĕплĕхпе уйрăлса тăрать. Сăмахран, университетра пĕрле вĕреннĕ тантăшсемпе çыхăну татăла-татăла каять тĕк ССОра пĕрле пиçĕхнисем пулăшу кирлĕ чух пĕрре чĕнсех чупса çитеççĕ».

## Стройотряд – мамонт мар

**Кăçал çуллахи каникул вăхăтĕнче виçĕ пин ытла хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм студентсен 55 ĕç бригадинче тăрăшнă. 9 тĕрлĕ ушкăна пайланнă çамрăксем. Педагогика отрячĕ – 23 /952 çын/, сервис отрячĕ – 17 /627 çын/, строительство отрячĕ – 5 /110 çын/, ялхуçалăх отрячĕ – 2 /108 çын/, проводниксен отрячĕ – 2 /40 çын/, пĕрле çÿрекенсен отрячĕ – 1 /45 çын/, ветеринари отрячĕ – 1 /8 çын/, волонтерсен отрячĕ – 3 /1242 çын/, финанс отрячĕ – 1 /20 çын/. 22 хастар производство практикинче пулнă.**

Паян республикăра пурĕ пиллĕк стройотряд çеç. Вĕсенчен пĕри – «Проспект-15». – Чăваш патшалăх университечĕн çумĕнче йĕркеленнĕ. Отряд командирĕ Сергей Кузнецов электроэнергетика факультетĕнче 3 курсра вĕренет. Студентсен ĕç-хĕлĕпе паллашма Мари Эл каччипе ятарласа тĕл пултăмăр. Йывăрлăхсене пÿрне хуçса шутларăмăр. Стройотрядсем сахаллин тĕп сăлтавĕ – çуллахи стройкăсенче студентсем укçа сахал ĕçлесе илни. Нумай çамрăк паян пур-çук укçашăн пилĕк авасшăн мар. Кăçал икĕ уйăхра 50 пин тенкĕ шантарнă: пĕлтĕр те çавнашкал тÿленĕ-çке. Анчах самай нумайрах илсе килнĕ. Çакăншăн, паллах, çамрăксем хĕпĕртенĕ.

Каччăсем Мускавпа Санкт-Петербург хушшинче çул тунă çĕрте ĕçленĕ. Строительство организацийĕ Чăваш Ен каччисемпе кăмăллă юлнине палăртнă.

– Ĕçĕ йывăрах мар. Икĕ уйăх чăтма пулать. Студентшăн 70 пин те пысăк укçа. Ăна чылайăшĕ тумтир туянмашкăн усă курасса калаçатчĕ. Телефонĕсене «çĕнетекенсем» те пулчĕç-тĕр. Килес çул та кайма палăртатпăр, – терĕ Сергей Кузнецов. Çуллахи вăхăтра отрядсене хамăр тăрăхрах тупăшлă ĕç сĕнекен пулсан вĕсем хаваспах килĕшессе те палăртрĕ.

Эппин, стройотрядсем мамонтсене е динозаврсене çаврăнман-ха, вилсе пĕтес хăрушлăх çук.

**Паллă çынсен çамрăклăхне Рита АРТИ йĕрленĕ, паянхи студентсен пурнăçĕпе Татьяна НАУМОВА кăсăкланнă.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

## Шăккалат икерчи



**400 миллилитр турăх, 300 грамм çăнăх, 60 грамм сахăр, 40 грамм какао, 1 çăмарта, 2 грамм апат соди, 5 миллилитр лимон сĕткенĕ, 60 миллилитр тип çу кирлĕ.**

Çимĕçсене пăтратмалла. Чустана нумай тытмалла мар, хăвăртрах икерчĕ пĕçерме пуçламалла.

## Суфле

**0,5 литр турăх, 1/3 стакан хăйма, 1/2 стакан сахăр, 1 апат кашăкĕ желатин, ванилин кирлĕ.**

Шывра шӳтернĕ желатина çулăм çинче вĕрилениччен тытмалла. Турăхпа хăймана, сахăра, ванилина миксерпа пăтратмалла, сивĕннĕ желатин хушмалла. Ку апата 10 минутрах хатĕрлеме пулать.

## Какайпа тăпăрч катлечĕ

**500 грамм чăх фаршĕ, 200 грамм тăпăрч, 50 миллилитр шĕвĕ хăйма, 1 çăмарта, пуçлă 1 сухан, 2 шăл ыхра, вĕтетнĕ 3 апат кашăкĕ укроп, сухари, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Суханпа ыхрана вĕттĕн турамалла. Фарша тăпăрчпа, çăмартапа, укроппа, хăймапа, суханпа, ыхрапа, пăрăçпа, тăварпа пăтратмалла. Катлет тумалла. Кашнине сухарипе йăвамалла. Ылтăн тĕс çапиччен икĕ енчен ăшаламалла.

## Пахча çимĕç хăпартăвĕ

**6 çĕр улми, пуçлă 2 сухан, 100 грамм шурă кăмпа, 2 помидор, 300 грамм сыр кирлĕ.**

**Соус валли 2 апат кашăкĕ хăйма, 2 апат кашăкĕ майонез, 1 шăл ыхра хатĕрлемелле.**

Çĕр улмине, сухана, кăмпана, помидора турамалла. Пахча çимĕçе сийлесе хумалла. Çиелтен соус ямалла, сыр сапмалла. Духовкăра 40 минут пĕçермелле.

## Плов

**500 грамм какай, пуçлă 2 сухан, 5 кишĕр, 0,5 стакан тип çу, 1 килограмм рис, 0,5 стакан тип çу, тăвар, техĕмлĕх кирлĕ.**

Какая – тăваткалласа, сухана – çурма çаврашкан, кишĕре пĕрчĕлесе турамалла. Казанра какай ăшаламалла, тăварпа пăрăç сапмалла, кишĕрпе сухан хушмалла. Малтан – рис, унтан шыв ямалла. Плова вăйлă çулăм çинче пĕçермелле.

## Сыр икерчи

**150 грамм сыр, 2 апат кашăкĕ çăнăх, 1 çăмарта, 1 апат кашăкĕ хăйма, 1 апат кашăкĕ майонез, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, чĕптĕм тăвар, тип çу кирлĕ.**

Сыра теркăламалла. Пăтратса кăпăклантарнă çăмартана майонезпа, хăймапа, çăнăхпа, тăварпа, апат содипе, сырпа пăтратмалла. Çак хутăша апат кашăкĕпе ăсса çатмана хумалла. Ылтăн тĕс çапиччен ăшаламалла.

## Пăрçа пătти

**1 стакан пăрçа, 1 стакан урпа кĕрпи, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Пăрçана шыва ярса лартмалла, 10-12 сехет шӳтермелле. Çав шыврах пĕçермелле. 20 минутран урпа кĕрпи, тăвар хушмалла. Пăтта çатмара тип çупа ăшаламалла.

## «Чĕрĕп»

**400 грамм какай фаршĕ, 1/2 стакан рис, 1 çăмарта, пуçлă 2 сухан, 2 кишĕр, 50 миллилитр сĕт, тип çу, 2-шер апат кашăкĕ хăйма, майонез, томат пасти, çăнăх, 1 чей кашăкĕ тăвар, техĕмлĕх кирлĕ.**

Риса çурма пиçиччен вĕретмелле. Кишĕре теркăламалла. Сухана вĕтетмелле. Фарша кишĕрпе, суханпа, риспа пăтратмалла, çăмарта, сĕт, тăвар, техĕмлĕх хушмалла. Çак хутăшран çаврашка тумалла. Кашнине çăнăхпа йăваласа тип çупа ăшаламалла.

Хăймана майонезпа, томат пастипе хутăштармалла, шыв кăштах ямалла. Çак соуспа «чĕрĕпсене» пăтратмалла. 20 минут пăшăхламалла.

## Макаронпа, сырпа

**300 грамм макарон, 2 помидор, 2 апат кашăкĕ çу çырли, 150 грамм сыр, 6 апат кашăкĕ олива çăвĕ, тăвар, пăрăç, укроп кирлĕ.**

Макарон пĕçермелле. Помидора çурма çаврашкан касмалла. Сыра теркăламалла. Макарона помидорпа, сырпа, çу çырлипе, олива çăвĕпе, пăрăçпа, укроппа пăтратмалла.

ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Чечекне татмалла-и?

**Сенполия пĕчĕк хунавĕ чечек çурать. Çамрăк тымар ан вăйсăрлантăр тесен çеçкине татмалла теççĕ. Тĕрĕссех-и?**

**Вероника ПЕТРОВА.**



Çулçăран тымар янă фиалка 6-12 уйăхран чечек çурать. Хăш-пĕр сенполи чечекĕпе маларах та савăнтарать – 3-5 уйăхран. Нумайăшĕ çеçке çурнă çамрăк чечек ӳсме чарăнать тесе, чăн та, ăна татать: паха апатлану çулçă сарма кайтăр. Çакă тĕрĕс те пулĕ. Çапах çеçке çурма пур услови те пур тăк мĕншĕн чарас? Малашне ӳссе татах чечек çурма çакă нимĕнпе те чăрмантармасть.

СЫВЛĂХ

# Сиплĕ те, усăллă та



Кĕркунне кашни килтех купăста йӳçĕтеççĕ. Асаннесемпе кукамайсем ăна авалтан каткапичкепех тăварланă. Купăстапа тĕрлĕ чиртен сипленнĕ. Кăчăртатакан сĕтеклĕ çимĕç хĕл кунĕсенче сĕтеле пуянлатать.



Унра С витамин нумай. 10 грамм купăстара çак витамин 2 миллиграма яхăн. Çавна пула купăста иммун тытăмне çирĕплетет, тĕртĕмсемпе клеткăсем ватăлассине чарать. Унсăр пуçне çак çимĕçре А, К, U тата В ушкăнри витамин нумай. Йӳçĕтнĕ купăста çаван пекех йодпа та пуян. Вăл тĕрлĕ органшăн усăллă. Ăна кунсерен çини пыршăлăхпа хырăмлăх чирĕсене хирĕç кĕрешме май парать, вар-хырăма ĕçлеттерет. Гастритран та хӳтĕлет купăста. Тухтăрсем йӳçĕтнĕ купăстана апат умĕн кунне икĕ хутчен çиме сĕнеççĕ. Ăна малтан тип çу е олива çăвĕпе пăтратмалла. Виçĕ эрне сипленмелле. Кунашкал салата кашни кун çини тата аванрах. Сахăр диабечĕпе аптракансемшĕн те усăллă вăл. Йӳçĕтнĕ купăста юнри сахăр шайне палăрмаллах чакарать.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Паха им-çам



**Тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк усратпăр. Вĕсен тислĕкĕпе мĕнле усă курма пулать-ши?**

**ВЛАДИМИР.**

Унпа ытларах тĕрлĕ пахча-çимĕçе апатлантарма усă кураççĕ. Им-çам хатĕрлемелли тĕрлĕ мел пур.

Савăта 1/3 чухлĕ тислĕк ямалла, шыв хушса пăтратмалла. 1-2 кун лартмалла. Хушăран пăтратмалла. Паха шыва тăррипе /1:3/ хутăштармалла та çимĕçсене шăвармалла.

1 пай тислĕке 10 пай шывпа хутăштармалла. Тислĕке типĕлле те сапма юрать. Унра паха япала нумайрах.

# Çулçа пухмалла-и?

**Садра е вăрманта пухнă çулçа тислĕк купине пухма юрать-и? Е çунтармалла-и?**

**РАИСА Ч.**

Кĕркунне е çуркунне пухнă çулçă çĕртсен питĕ усăллă. Çунтарсан унра ӳсен-тăрана кирлĕ азот юлмасть. Çĕрĕк çулçăра вара азотпа фосфор ĕне тислĕкĕнчи чухлех. Унсăр пуçне урăх элемент та пур. Çавăнпах çулçăран компост хатĕрлеме юрать çеç мар, пуçтармалла та. Вăрманти йывăççенчен тополь, вĕрене çулçи пахарах. Юман çулçине пухма сĕнмеççĕ.

Çулçă икĕ çул таран çĕрет. Тислĕк тума купаланăскерне хушăран пăтратсан аван.

# «Кĕрĕклĕ» ыхра

Юлашки çулсенче хĕлле е çумăрлă юр çăвать, е юрлă çумăр ӳкет. Çавăнпах тепĕр чухне раштавра ыхра симĕслене тытăнать.

Кун пек ан пултăр тесе пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ ăна çулçăпа витетĕп. Вунă сантиметр та хуратăп типĕскерне, çуркуннеччен пурпĕр лапчăнать. Кун пек кĕрĕк айĕнче ыхра вăхăтсăр шăтмастех. Çанталăк ăшăтсан та çулçă айĕнче температура пĕрешкел тăрать. Çулçăпа витнин паха енĕ татах та пур – çуркунне çĕр типсе çурăлмасть. Çавăнпах ăна шăварма васкамалла мар. Çулçа айккинелле çеç пăратăп. Кун пек çум курăк та сахал шăтать, типĕре те нӳрĕ тытать.

**НАТАЛЬЯ С.**

# Хурлăхан мĕншĕн авăнать?

**Малтан хурлăхан тĕмĕсем лайăх ӳсрĕç. Анчах çурла уйăхĕнче çулçине тăкрĕç те туратсем хуралса кукăрăлса пĕтрĕç. Мĕн пулчĕ-ши?**

**ВЛАДИМИР З.**

Хурлăхан, ахăртнех, крахмал сывлăмĕпе /мучнистая роса/ чирлет. Ку амак турата, çулçа, çимĕçе пĕтерет. Чир йывăçа çуркунне çакланать. Çулла çулçăсем крахмаллă, çăнăхлă сийпе витĕнеççĕ, каярах вăл кĕççе евĕр пулса ларать. Ăшăпа чир аталансах пырать. Чир азотпа пуян вакă туратсене е фосфор çитменнипе асапланакан çамрăк хунавсене ытларах суранлатать.

Кукăрăлнă туратсене кĕркунне касмалла, çулçа пуçтарса çунтармалла. Çуркунне тĕме фосфорпа тата калипе имçамламалла та тавраша чавмалла. Чечек тăкăнсан тĕме кашни 10 кунра кальциленĕ содăпа /10 литр шыва 50 грамм сода тата 30-50 грамм супăнь/ 3-4 хутчен сирпĕтмелле.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

- Катлет ăшаланă чухне фарша çăмарта шурри ямасан аванрах, мĕншĕн тесен çăмарта час пиçет. Çавна май какай пĕрĕнсе шыв нумай кăларать те катлет типĕ пулать.
- Яка пулла тасатнă чухне алăран шуса ан тухтăр тесен пӳрнене тăварпа пуçмалла. Вара пулă шуса ӳкмĕ.
- Пулă катлечĕ фарша вĕттĕн тураса ăшаланă сухан хушсан сĕтеклĕрех.
- Ăшаламалли пулла сухарипе йăваличчен сивĕ сĕте чиксен е хăйма сĕрсен тутлăрах пулĕ.
- Пулă ăшаланă чухне тип çупа услам çу хутăштарсан апат хитре тĕслĕ пиçĕ, çатма çумне те çыпăçмĕ.
- Пулла хĕртнĕ духовкăна çеç лартмалла. Кун пек вăл хитре тĕслĕ пулĕ.
- Сĕт пătти пĕçернĕ чухне тăвара кĕрпе яриччен хушмалла.
- Хура тул пătти сарăлса пиçтĕр тесен кĕрпене малтан ăшаламалла. Ăна е типĕ çатмара хĕртмелле, е вĕри духовкăна лартмалла.
- Рис кĕрпи пĕçернĕ чухне ăна кашăкпа пăтратмасан та юрать. Хушăран кастрюле çĕклесе силлемелле çеç.
- Риспа пĕçернĕ апата пăспа ăшăтсан аван.
- Типĕ какай пĕçернĕ е ăшаланă чухне сĕтеклентĕр тесен кăштах уксус сапма юрать.
- Тутлă пиçтĕр тесен какая çапла ăшаламалла: татăксене пăрăçпа тата услам çупа сăтăрмалла, çатмана кăштах шыв тата 1-2 апат кашăкĕ коньяк ямалла.
- Духовкăра ăшаланакан какая вăхăт-вăхăт çимĕçрен тухакан сĕткенĕпе сапмалла. Апат шывĕпе хăйма хутăштарсан какай çиме техĕмлĕ соус пулĕ.
- Запеканка тутлă пултăр тесен тăпăрча аш арманĕ витĕр мандарин, лимон е апельсин хуппипе кăлармалла.
- Рис кĕрпи пĕçернĕ май ан салантăр тесен шыва 2-3 апат кашăкĕ сĕт хушмалла. Шурă тĕслĕ пултăр тесен темиçе тумлам лимон сĕткенĕ тумлатмалла.




АХ, АНЧАХ...

# Манăн кинĕм çавнашкал

Хам хĕр пекехчĕ вăл маншăн. Ирхине ĕне сума тăратман, ĕç хушсах курман. Пĕчĕк ача мар – чашăк-тирĕк, урай çумаллине хăйĕнех ăнланмалла пуль. Анчах та чылай чухне унран та пăрăнма тăрăшатчĕ. Картишне вылăх патне кăларман. Кăнтăрлаччен çывăрса выртнăшăн та вăрçман. Ял таврашĕнче хĕрарăма ĕç хушмалла-и вара? Çум курăклă пахча куçа хăех тăрăнать пуль. Кĕтӳрен килнĕ ĕнене те вăхăтра сумалла. Унран вара кĕтсе илме çукчĕ. Хамах картишне витре йăтса тухаттăм. Вăл кахал та кутăн пулнишĕн вылăх айăплă-и? Пĕр сăмахпа, сăпкара сиктертĕм кине. Хĕрĕме те кун чухлĕ ачашласа курман. Ним çукран вăрçăнас йăла та çук ман. Хамăр та вăй питти, мĕн пур ĕçе упăшкапа иксĕмĕрех тăваттăмăр. Пурăна-киле ачисене те пăхми пулчĕ кин. Хăйăр купи çине кăларса лартать те пӳртре телевизор умне вырнаçать. Кайран пĕчĕк ывăлĕсем çинчен манса кайсах çухалса çӳреме тытăнчĕ. Амăшĕ патне е вĕренме тесе тухса каять те пĕр-икĕ эрнесĕр те киле таврăнмасть. «Сан кин таçта урăххине тупман-и?» – тенине хăлхана та чикес килместчĕ. Çын пирки япăх шухăшлас темен те, хамăр та нихăçан та ял култарман.

Кăçал пĕтĕмпех уçăмланчĕ. Халь нимĕн иккĕленмелли те çук. Пирĕн ял кăна мар, пĕтĕм район ун пирки калаçать! Ман кин хăйĕнчен вунă çул кĕçĕнрех 18 çулти каччăпа çыхланса кайнă. Вĕсен хитре пӳртне ăмсаннă-мĕн. Кермен пек çуртне ашшĕ-амăшĕ кĕçĕнни çине çырнă тет. Унпа туй та кĕрлеттерес шухăшлă. Мăнукăмсем вара амăшĕпе каясшăн мар. Ял çыннисем тĕлĕнме те пăрахрĕç ĕнтĕ. Кинĕм ниçта та ĕçлемест. Каччи, нумай пулмасть кăна шкул пĕтернĕскер, институтра вĕренет. Хулара хĕрĕсем нумайййне, кинпе вăхăт çеç иртернине те пытармасть. Тем те курăн ку пурнăçра, çын ачишĕн пит хĕретме тивет халь. Ашшĕпе амăшĕшĕн пулсан вара – кирек мĕн калаçчăр. Вĕсем те айккинче юрату шырани пирки пĕрре мар хăлхана кĕнĕ. Хам çуратса ӳстернĕ хĕр мар пулин те, ял çыннисем умĕнче калама çук намăс.

Ывăлăм ун çине алă çĕклесе хăйĕн ятне варалаканни мар. Унпа вăрçă кăлармасăрах уйрăлма тĕв турĕ. Ӳкĕтлемерĕ те, кулянмарĕ те. Пĕрре айккинелле чупма хăнăхнă хĕрарăма чарма çук теççĕ. Таньăна пирĕн çуртра кӳрентерекен пулман. Мăшăрĕ ĕçкĕпе иртĕхмен, айккинелле чупман. Укçатенкĕ хĕрхенмен, мĕн кирлине туянса панă, выçă лартман. Мускава ĕçлеме çӳрекенскер, паллах, ăна сыхласа ларма пултарайман. Шаннă вăл Таньăна. Унпа хитре пурăнма, ача-пăча ӳстерме ĕмĕтленнĕ.

Шеллетĕп те кине. Вун саккăртипе телейлĕ пулаймĕ. Пусĕ пăтранса кайнипе хăйĕнчен кулнине те ăнланмасть-ши айван хĕрарăм? Каччăсем валли хулара хĕр сахал-и? Хăй шăпине хăех таптаса аркатрĕ. Пĕрре каснă чĕлле каялла çыпăçтараймăн. Çак мыскара хыççăн ывăлăм та каçарас çук. 30 çула çывхараканскер халĕччен ниçта та йĕркеллĕ ĕçлесе курман. Хăй ăçта йăнăшнине ăнланса илĕ, анчах та кая юлĕ. Чавса çывăх – çыртма çук.

**ВАЛЕНТИНА.**
Шупашкар районĕ.

ВĂТ, ТĔНЧЕ!

# Пурнăç хуçи

Петĕрĕн сиплен-мешкĕн санаторие каймалла пулса тухрĕ. Арăмĕ пур-çук укçана пуçтарса парса ячĕ ăна. Кĕтнĕ кун чипер тавранчĕ çемье пуçĕ. Анчах пуш алăпах килсе кĕчĕ арçын киле. Арăмĕпе ачипăчи валли парне тупанмашăн пĕр пус та юлман унăн. Çакăншăнах вăрçă пуçламарĕ хĕрарăм. Чăнах, выçă лармаççĕ, хитре тумланса çӳреççĕ – мĕншĕн ахалех тавлашмалла?



Кайран тин паллă пулчĕ: арçын санаторире кичемленсе ларман, еркĕн тупнă. Унпа пĕрле ресторан-кафере хăналаннă, тавралăхпа паллашнă. Вăрттăн хутшăну çинчен арăмне каласа кăтартма та именмерĕ вăл. Урăх хĕрарăм патне пĕр вĕçĕм шăнкăравларĕ. Алла кĕнĕ укçана ăна ярса пачĕ. Ку ирсĕрлĕх тарăхтарсах çитерчĕ кил хуçи арăмне. Пĕр кун упăшкин япалисене пысăк сумкăна пуçтарса лартрĕ хайхискер. Лешĕ çакна кăна кĕтнĕ тейĕн, çийĕнчех килтен тухса вĕçтерчĕ. Телей кайăкне тытма ĕмĕтленчĕ-ши? Черетлĕ юратăвĕ ик аллине сарса кĕтсе илĕ терĕ-ши? Эх, йăнăшнă Петĕр. Тепĕр арçынпа пурăнать иккен унăн еркĕнĕ. Хăйĕн пурнăçне тĕпрен улăштарасси пулмарĕ вара – ирĕксĕрех каялла таврăнма лекрĕ. Арăмĕпе ачисен ăна йышăнма тиврĕ. Урăх ăçта кайтăр-ха вăл?

Хĕрарăмсене илĕртме пĕлет Петĕр. Тепрехинче, хулана кайсан, урăххипе паллашрĕ. Каллех хăйне ирĕклĕ туйрĕ. Кăштахранах ун патне куçрĕ. Хăйне пурнăç хуçи пек туйрĕ.

Ку хутĕнче саккунсăр арăм ача çуратса пачĕ ăна. Пур пĕрех канлĕ пурăнаймарĕç вĕсем. Укçа çитсе пымарни харкаштарчĕ-ши иккĕшне? Петĕрĕн алли ĕç патне пыманнине пĕлсен кирек кам та сивĕнĕ.

Пепкипе те яла килсе çӳрерĕ арçын. Вăл, паллах, арăмĕпе ачи-пăчи, ял-йыш сăмахне хăлхине те чикмерĕ. Кăштахранах хула пурнăçĕ йăлăхтарса çитерчĕ Петĕре. Вăл тăван киле персе çитрĕ. Алимент тӳлеттересшĕнччĕ ăна. Ирĕксĕрлесе ĕçлеттерсе те пăхрĕç. Çук, ăса кĕмерĕ ашшĕ. Кĕçĕн хĕрне укçа парса тăмарĕ.

Ялти пĕччен хĕрарăмсене куç хыврĕ Петĕр. Меллĕ самантпа усă курса вĕсем патне кĕркелесе тухрĕ. Çынсем çакăн çинчен калаçса ывăнчĕç ĕнтĕ. Анчах ăна улăштарăн-и?

Халĕ те саккунлă пĕртен-пĕр арăмĕпе пурăнать вăл. Аслă ачисем çемье çавăрса килтен тухса кайрĕç. Мăнукĕсем çитĕнеççĕ. Вĕсене те пулăшасах килмерĕ арçыннăн.

Сасартăк чир-чĕр аптăратма пуçларĕ Петĕре. Чипер çӳренĕ çĕртех сулăнасулăна кайрĕ, ӳксе тăнне çухатрĕ вăл. Никам та мар, арăмĕ шеллерĕ арçынна. Мăшăрне больницăна вырнаçтарчĕ. Сиплененĕшĕн пысăк укçа кăларса пачĕ. Çакна хаклама пĕлчĕ-ши Петĕр? Темле çав. «Куç курать те шăл витмест», – урампа саркаланса иртекен хĕрсене çаплипех чӳречерен сăнать арçын. Ĕмĕр çав тери хăвăрт иртнине кăна сиссе юлаймарĕ вăл...

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ЧУНРИ

# Туйăмсене чараймастăп

Упăшкапа 20 çул пĕрле пурăнатăп. Лайăх вăл манăн. Лăпкă, сăпайлă, ĕçчен. Ним çукшăн чăркăшаканни мар. Эрех ĕçсе тарăхтармасть, юттисем патне чупмасть. Çемьешĕн тăрăшать. Халĕччен ман çине алă çĕклесе курман, нихăçан та сасă та хăпартман. Тĕрĕ тĕрлеме те, çыхма та пĕлет. Чечексем юратать. Эпĕ унран вунă çул кĕçĕн. Арăмĕ хăйĕнчен çамрăкрах пулнишĕн савăнать кăна вăл. Анчах та... Калама та намăс, мана тепĕр арçын килĕшет. Хĕрарăм мăнтăртан иртĕхет теççĕ. Тĕрĕсех те пуль. Çулталăк ĕнтĕ упăшкаран вăрттăн Мишăпа тĕл пулатăп. Пĕр-пĕрне саватпăр эпир. Туйăмсене ирĕке яма пире халь тин никам та чарма пултараймĕ. Анчах та упăшкаран уйрăлма шухăшламастăп. Савнин те мăшăрĕ пур. Унăн çемйине те аркатас килмест. Хăçан та пулсан вăрттăнлăх çиеле тухатех теççĕ. Хальлĕхе вара никам та пĕлмест. Кăçал çулла тинĕс хĕрринче те пĕрлех кантăмăр. Манăн та, унăн мăшăрĕ те нимĕн те сисмерĕ. Мишăпа тĕл пулса киле таврăннă хыççăн упăшка кусĕнчен те пăхма вăтанатăп. Вăл вара эпĕ ĕçрен таврăннă çĕре апат пĕçерсе хурать, килте таса та тирпейлĕ. Сашăран уйрăлас килмест манăн. Мишăпа та тĕл пулма пăрахмастăп. Юратнă çыннăм пуртан утса мар, вĕççе çӳретĕп. Кăмăлăм та яланах лайăх. Сăнран та чиперлентĕм. Хама пăхма тытăннипе, хитререх тăхăнма тăрăшнипе çыхăннă пуль ку. Лайăх пире иксĕмĕре. Пĕр-пĕрне пуçа çухатасла юратнă чухне çылăх çинчен те манса каятпăр, çунат сарса иксĕмĕр те тӳпере вĕçетпĕр. Савнăскерĕм çинчен пĕрмай шухăшланипе ыйхăм та килмест. Кăвар евĕр вĕри юрату чуна ăшăтать, пурăнма вăй-хăват парать. Калама çук телейлĕ эпĕ.



Ан тиркĕр, ан вăрçăр мана. Тĕрĕс мар хăтланнине, мăшăр умĕнче айăпа кĕнине хам та лайăх пĕлетĕп эпĕ. Анчах та туйăмсене чараймастăп...

**ИРИНА.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Юратнă юрăç

Пирĕн ялта çĕнĕ клуб хута кайрĕ. Çавна май юрăçсем концертпа килме пуçларĕç. Ял-йыша юрлаттарса ташлаттараççĕ вĕсем. Эх, хавасла та Шупашкар хăнисемпе!

Манăн кӳршĕ те юрлама юратать. Ĕçсе ӳсĕрĕлсен ăна çитекенни те çук. Анчах Петĕре никам та итлесшĕн мар. Те çавăнпах хытă кăшкăрать вăл? Пурне те йăлăхтарсах çитерет.

Хайхи Петĕр пĕр концерт та сиктермест. Ниçта та ĕçлеменскер укçа ăçтан тупать-ши тулккăш? Унсăр пуçне пур юрăçпа та кăсăкланать вăл. Çинçе пилĕклĕ хĕрсем çинчен уйрăмах темĕн те пĕр пĕлесшĕн.

Пĕрре çапла концерт хыççăн хăй килĕштерекен юрăç патне чупса пынă манăн кӳршĕ. Ăна чечек çыххи тыттарнă, унпа ăшшăн калаçнă. Чиперкке, паллах, сăмах чĕнмесĕр пăрăнса иртеймен. Меллĕ самантпа усă курса Петĕр телефон номерне ыйтса илнĕ. Унтанпа темиçе çул иртрĕ ĕнтĕ. Çав юрăçăн çемье пуррине пĕлет вăл. Çавăнпа шăнкăравлама именет-ши? Те калаçу сыпăнаймасран шикленет?

Петĕр ват хусахсен йышне кĕчĕ. Юрăçпа юнашар тăнине халĕ те ăшшăн аса илет вăл. Унăн телефон номерĕ тахçанах ăс-тăнне çырăннă. Çакăн çинчен ялĕпех пĕлеççĕ. Анчах ăна каласа кăтартма чарăн-и?

Телевизорпа е хаçатра унăн сăнне курсанах ача пекех савăнать Петĕр. Çав юрăç пирĕн яла татах килессе чăтăмсăррăн кĕтет. Кăçал мар тăк тепĕр çул çитсе тухатех ахăр. Ун чухне эпир те курав залне вырнаçса унăн пултарулăхĕпе киленĕпĕр.

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

Иван ЕРОФЕЕВ

# Пӳрни пӳрт умне килмен

**Калав**



Атăл тăрăхĕнчи пĕр хуларан Самара çӳрекен автобусра паян çын нумаях мар. Акă пĕр чарăнура ватă енне сулăннă, вăтам пӳ-силлĕ, тирпейлĕ тăхăннă арçын кĕчĕ. Вăл водителе сывлăх сунчĕ те ăçта çити каймаллине пĕлтерсе çул укçи тӳлерĕ. Унтан пушă вырăна вырнаçрĕ. Пĕр самантран чӳрече çумнерех куçрĕ, тавралăха сăнарĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр тĕнче. Вырăн-вырăнпа çеç тырă хирĕсем, пиçсе çитнипе сарăха пуçланă лаптăксем... Те шухăшĕ урăх йĕрпе кайрĕ, арçын кĕсйинчен сăмса тутăрĕ йывăртарах чухне Самар тăрăхне куçса тĕпленнĕ.

Хĕр эпĕ хĕсметре тăракан хулана ĕçлеме килсе вырнаçнă, унпа пĕрле – юлташĕсем те. Çак кунран эпир унпа тăтăшах тĕл пулма тăрăшаттăмăр. Май килмен чухне çыру урлă калаçаттăмăр.

Тепĕр çур çултан хĕсмет вăхăчĕ вĕçленчĕ, эпĕ киле таврăнтăм. Питĕ шел, Верăпа тĕл пулма май килмерĕ. Вăл черетлĕ канăвне ялне кайнăччĕ, ашшĕ-амăшĕн килне. Манăн вара пуçра та, чунра та Вера ячĕ, Вера сăнĕ. Чунчĕрене пĕр самантлăха та кăларса пит-куçне шăлкаларĕ, ассăн сывларĕ.

– Калаçса пырсан çул кĕскелет. Мĕн çăмăлпа çула тухрăр-ха? Ачăрсем патне каятăр-и? – текех сăмах чĕнмесĕр чăтаймарăм.

– Ачасем патне мар... Эпĕ питĕ хуйхăллă çын. Хамăн унччен тытма май килмен пурнăç телейне шырама тухнă, – терĕ хайхискер. Кăштах тăхтанă хыççăн сăмахне малалла тăсрĕ. Эпĕ ăна чăрмантарас мар тесе хутран-ситрен çеç «апла-и?», «çапла-и?» текелесе пытăм.

– Эпĕ çамрăк чухне кăнтăрти пĕр республикăра хĕсметре тăтăм. Пĕррехинче ирĕк илсе юлташ салтаксемпе пĕр кунлăх хулана тухрăмăр. Кинотеатра кĕрсе кино куртăмăр та пыратпăр хула урамĕпе. Пăхатпăр та – пире хирĕç виçĕ чипер хĕр килет. Калаçу пуçартăмăр. Тĕлĕнмелле – кусем те чăваш хĕрĕсем пулчĕç, тулĕк вĕсем Самар тăрăхĕнчен. Вера ятли уйрăмах ман чĕрене краççын сапса чĕртнĕ вут пекех пĕçертсе илчĕ. Эпĕ сăмахăма унпа ваклама пикентĕм. Хам чăваш пулнине каларăм. Вăл ман кăмăла кайнине пĕлтерме те хăюлăх çитертĕм. Верăн ашшĕпе амăшĕ Чăваш Енре пурнăç канлĕх памарĕ вăл.

Хĕсмете ялти хĕр тусăм, тĕрĕсрех, юратăвăм ăсатнăччĕ. Вăл та ăшшăн кĕтсе илчĕ. Эпир унпа та çырусем çӳретсех тăнă. Çапла халĕ ман чĕрере юратăвăн икĕ кăвайчĕ ялкăшма пикенчĕ. Ялти хĕр Анна ятлăччĕ. Унпа пирĕн каçхине те, кăнтăрла та тĕл пулма майсем пурччĕ. Çапла вара юратун тараси Анна енне тайăлма пикенчĕ.

Кĕр мăнтăрĕпе Аннапа çемье чăмăртама, кил-çурт, юрату ăшшипе ăшăнса пурăнма пикентĕмĕр. Çапла вара Вера сăнарĕ манăçрĕ.

Икĕ-виçĕ çултан хамăр çурт-йĕр çавăрса уйрăм пурăнма пуçларăмăр. Ачасем те кун çути курса çемьене савăнăç кӳме пуçларĕç. Пурăнатпăр çапла. Çумра мăшăр пулсан та Вера юратăвĕ чунра йăшăлтатма пуçларĕ. Анναран вăрттăн çыру çыртăм. Каçару ыйтрăм – хамăн сăмаха тытайманшăн. Часах хурав килчĕ. Вăл мана пачах та çилленмен иккен. «Турă çырман пулĕ» , – тесе çеç çырнă.

Атă пăрине михĕре пытараймăн. Вера çырăвĕ мăшăрăм Анна аллине лекнĕ. Пĕр кунхине ĕçрен килтĕм те, мана Анна:

– Алексей, пĕлетĕн-и, пирĕн пата хăна килнĕ. Вера ятлă, Самар тăрăхĕнчен, – терĕ ăшă кулăпа.

– Ăçта вара халĕ вăл?

– Лавккана кайрĕ-ха, – хуравларĕ мăшăрăм.

– Паçăрах килнĕ-и? – ыйтрăм эпĕ.

Чĕнмерĕ-ха Анна. Кăштахран çеç манăн шăлавара çунă чухне кĕсьерен тупнă çырăва тыттарчĕ.

– Акă вăл санăн хăнана килнĕ Веруку, – терĕ йĕпе шăлавара силлесе.

Вăрттăн çырăва тупса вуланă хыççăн та Анна пĕр сивĕ сăмах та каламарĕ. Аллă çул ытла килĕштерсе, юратса пурăннă пурнăçа ăнсăртран тупăннă çыру аркатма пултараймарĕ. Аркатма мар, Анна мана тата хытăрах килĕштерме пуçланине сисрĕм. Тăватă ача – пĕр ывăл тата виçĕ хĕр – çуратса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă-çке. Арçын ачи халĕ ют çĕршывра пурăнать. Паллă çын, хăйĕн çемйи. Хĕрсен те хăйсен çемйисем. Пултарулăхĕсемпе хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Пурнăç çулĕ епле такăр пулсан та такăнмалли тупăнатех. Юратнă мăшăрăм сарăмсăр куç хупса пĕччен тăратса хăварчĕ.

Тирпейлесе пытарнă хыççăн пĕр-икĕ уйăхран пĕчченлĕх, кичем пурнăç вăрăм çула, хĕсметре тăнă чухне паллашса юратнă хĕрарăм патне йыхăрчĕ.

Часах автобус чарăнчĕ те ман çул юлташĕ автобусран тухса юлчĕ. Эпĕ унăн ятне ыйтса пĕлеймерĕм. Çавăнпа та калавăмри тĕп сăнара Алексей ятпа сăнласа пама шухăшларăм.

* * *

Автобусран анса юлсан Алексей асфальтлă çултан инçех мар курăнса ларакан ял еннелле хуллен утрĕ.

Утать çулпа арçын. Çурăмĕ çинчи ĕмĕтсен кутамкки пуснă евĕр кăштах пуçне уснă хăй. Тĕрлĕ шухăш çурхи шыв пек шавласа пăтранать. Мĕнле кĕтсе илĕ ăна Верук? Ун ĕмĕчĕпе килĕшсе Алексее пурнăçра кичемлĕхе сирме пулăшĕ-ши, ун патне пурăнма пыма килĕшĕ-ши?

Акă яла çитрĕ. Тип çырма урлă хывнă йывăç кĕпер урлă каçса кĕчĕ. Илемлĕ тавралăх. Ку ялта маттур çынсем пурăнаççĕ пулас. Кил-çурчĕсем пурин те тирпейлĕ тата илемлĕ. Çак илеме курса Алексей утма чарăнчĕ. Ялĕнче икĕ аслă тата тăватă-пилĕк пĕчĕк урамсем.

Халĕ ăçта каймалла? Веруксем ăçтарах пурăнаççĕ-ши? Камран ыйтмалла? Çак шухăшсемпе пуçне ватнă вăхăтра пĕр тăкăрлăкран кинеми хăйĕн качакине мăйракинчен кантрапа кăкарса та вăрçса, аслă урама сĕтĕрсе тухнине асăрхарĕ.

– Мур качаки, ватăлса сухалланнă пулсан та ăс кĕмест, кĕтӳрен кăнтăр кунĕнче тарса килет, – кăшкăрчĕ чĕр чуна аллинчи патакĕпе хăмсарса хĕрарăм.

– Чим-ха, тăхлачă, качакуна вăрçма ĕлкĕрĕн-ха, эсĕ мана Веруксем ăçтарах пурăннине пĕлтермĕн-ши? – çывхарчĕ Алексей.

– Вăхăтăм та çук манăн санпа калаçма, ак çак шуйттан мăйракине кĕтĕве çитерсе ямалла, тен, эсĕ ырăпах çӳретĕн пулĕ-ха та... Вăн çавăнталла уттар, эпĕ тухнă тăкăрлăка асăрхарăн пулĕ, Веруксен килĕ унталла пăрăнса кĕрсенех, – терĕ аллипе унталла тĕллесе. Хăй çавăнтах качакине çавăтса малалла уттарчĕ.

Алексей кăтартса янă çурт патне çитрĕ те уçă чӳрече умĕнче арçын ача ларнине асăрхарĕ. Ача хăйсем патнелле çывхаракан арçынна курсанах:

– Мама, к нам какой-то дядя идет, – тесе кăшкăрчĕ.

Ача сассипе чӳречерен пĕр хĕрарăм пырса пăхрĕ те часах çухалчĕ. Унччен те пулмарĕ, хайхискер крыльцапа урамалла васкаса тухрĕ. Ăна курсанах Алексей тĕлĕнсе кайрĕ.

– Верук, эсех-и ку? Мĕнлеха, пĕрре те улшăнман?

– Эпĕ Верук мар – унăн хĕрĕ Оля пулатăп.

Оля чăнах та йăлтах амăшĕ пекех. Пичĕ-куçĕ, çӳçĕ тата еплерех, умĕнчи çурма кăтрарах – йăлт амăшĕнни пек. Тĕлĕннĕ арçын савăнăçпа çиçрĕ.

**/Вĕçĕ çитес номерте/.**

## СĂВĂ СĔВЕМĔ

**Микул ПУЛАР**

* * *

Пĕрремĕш хут сана эп чуптăватăп,
Ачашшăн кăкăрна эп тĕкĕнетĕп...
Юратăва, кала-ха, мĕн тăвайăн?
Асамлăх тĕнчине мана тĕкетĕн.

Санра чăнах та пур-çке мĕн асамлăх,
Пуç çавăрнать курка сăрасăр.



Юлать саманат ку ĕмĕр асăнмалăх,
Туртать-çке юрату пĕр сассăр...

Пĕрремĕш хут сана эп чуптăватăп,
Юратнă чух эс темĕн те тăвайăн...

* * *

Çĕр каçипе пĕрле ларатпăр,
Сăмах çăмхийĕ сӳтĕлет.
Канма пĕлмесĕр калаçатпăр,
Ав тухăç енĕ хĕрелет...

Киле кайма та çитрĕ вăхăт,
Автан систернĕн сас парать.
Йăмра çулçи те нӳрĕ: «Тăхăн...» –
Калас пекех-çке туйăнать.

Çут çăлтăрсем хуллен сӳнеççĕ,
Ак сирĕлет çăра тĕтре...
Унпа пĕрлех вĕсем çĕтеççĕ,
Тăрса юлаççĕ ĕмĕрте.

* * *

Сан куçу çут çăлтăр – йăлтăр!
Уйăх çутинче çиçет-çке чăлтăр...
Кăшт сисетĕп, тем каласшăн,
Ман çине пăхатăн ăшшăн.

Сан куçу вăл – тĕпсĕр кӳлĕ,
Авăрне лексен мĕн пулĕ?
Хăрамастăн та – чĕтретĕн –
Вилĕмрен çăлса чĕртетĕн...

Сан куçу – хĕвел çути вăл,
Шиклĕ мар тухсан та тăвăл.
Ĕмĕрех пĕрле пулсассăн
Сывлас çук нихçан та ассăн...

**Маюк БУЛАНОВА**

### Сиренĕм, сирень

Сиренĕм, сирень,
Кĕренĕм, кĕрен,
Ача пек ӳстертĕм сана.
Уларĕ тăман,
Шартлатрĕ юман,
Эс пурпĕр усмарăн пуçна.

Пĕрре çуркунне
Кĕрпек çеçкӳне
Эп патăм татса савнине.
Манаймăп, савни,
Ман чунăм парни,
Куçран ытарса пăхнине.

Çулталăк иртсен,
Шур юр ирĕлсен,
Ик çул такăрланчĕ расна.
Сиренĕм, сирень,
Кĕренĕм, кĕрен,
Пĕр эсĕ йăпатрăн мана.

Иртеççĕ кунсем,
Иртеççĕ çулсем
Пăла юххипе явăнса.
Çапах кунсерен
Ман вată сирень
Ларать иртнине астуса.



# Çĕршер хĕрарăм чунне тыткăнланă арçын...



**Ун пирки «ХХ ĕмĕрти чи ясар арçын» теççĕ. Çак сăмах-юмах чăнлăхпа килĕшсе тăрать-ши? Унăн пурнăçĕнче 3 пин ытла хĕрарăм пулнă имĕш… Пĕлекенсем каланă тăрăх, вăл талăкра хăть те мĕн чухлĕ хĕрарăмпа савăшма пултарнă. Чи кирли – кашнинех киленÿ кÿнĕ.**

### Пророк тăсăмĕ

Али Хан принц Виççĕмĕш Ага Хан ывăлĕ пулнă. Али пурнăçĕ тĕрлĕ пăтăрмахран тытăнса тăнă. Тĕп вырăн унта хĕрарăм, спорт тата сунар йышăннă. Али Хан Мухаммедăн тÿрĕ тăсăмĕ пулнă – пророкăн тăван хĕрĕ Фатима енĕпе. Али ашшĕне – Султан Мухаммед Ага Хан имама – Индири вунпилĕк миллион мăсăльман-исмаилит хăйсен тĕн ертÿçи вырăнне хурса хисепленĕ. Чăн та, ывăлĕ пачах урăх енĕпе чапа тухнă...

Али тĕлĕнмелле хитре çуралнă. Тухăç тата Итали юнĕсем пĕрлешни те çапла витĕм кÿнĕ-тĕр. Италире çуралнăскер Европăра ÿсĕ вĕреннĕ. Арçын ачана çуралнă чухнех тĕлĕнмелле пысăк пуянлăх кĕтнĕ. Унпа усă курма та хăвăртах хăнăхнă вăл. 1929 çулта амăшĕ вилсен Али Лондона куçнă – ашшĕ ăна унта юриста вĕренме янă. Али машинăпа чупнă, лашасемпе туслашнă. Ун йĕри-тавра ялан чиперккесем пулнă. Али спорт машинипе чупас енĕпе Европăри ăмăртусене профессионал шайĕнче хутшăннă. Сунара Африкăна çÿренĕ. Çав вăхăтрах ăратлă лаша тытакан нумай-нумай ферминчи ĕçпуçа хăй еккипе яман. Унăн ку йышши фермăсемпе виллăсем Ирландире, Францире, Швейцарире, Венесуэлăра пулнă. Виçĕ арăслан, çичĕ тигр, 20 леопард, тата пантера – Али сунарçă тытнă чĕр чунсен тулли мар списокĕ. Арçын сунара тухнă май ытти пуян пек хÿтлĕх мелĕсемпе те апаланман. 1932 çулта вăл Бомбейран Сингапура пĕр моторлă самолетпа вĕçнĕ – 10 пин километр, çĕр çине пачах анса лармасăр. Çак вăхăтра вăл çĕрпе радиоçыхăну та йĕркелмен. Ку та уншăн, хăй калашле, "вăхăта хавасла ирттерни" кăна пулнă.

Тĕнче иккĕмĕш вăрçи вăхăтĕнче ăна хăюлăхĕшĕн тата акăлчанла, французла, арабла питĕ лайăх калаçнăшăн пысăка хурса хакланă. Али Хана яваплă та хăрушă хушусене пурнăçланăшăн "Çар хĕресĕпе" тата "Бронза çăлтăрпа" чысланă. Каярахпа, 1958-1960 çулсенче, Али Хан ПНОра Пакистан интересĕсене хÿтĕленĕ – çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче авиакатастрофăра виличчен.

### Самантлăх юрату

Пĕрремĕш хут 23-ре авланнă, çÿллĕ те яштака Джоан Барбра Гиннеса качча илнĕ. Хуняшшĕ тĕнчипе паллă рекордсен кĕнекин "ашшĕн" тăванĕ пулнă. Çак каччăн хĕрсемпе паллашмалли меслет пулнă: вăл халăх тăп-тулли залра пĕр-пĕр пикене суйланă та унран куç илмесĕр ларнă: чиперкке те ăна асăрхиччен. Кайран ăна чечек айне тунă, пике кăмăлне йăлт тивĕçтернĕ... Çак самантра Али ку хĕрарăма чăнласах юратнă, çак самантра...

1936 çулта парламент членĕ Лоэл Гиннесс судра çапла каласа кăтартнă. Вăраха тăсălман командировкăна кайнă май вăл килте çамрăк та телейлĕ арăмне Джоана Али Ханпа хăварнă. Лешĕ упăшкине питĕ юратнă. Анчах та савнă мăшăрĕ киле таврăнсанах пĕр тăхтаса тăмасăр уйрăлма ыйтнă – вăл Алие качча тухма пуçтарăнать-мĕн...

Али Джоана паллашнăранпа виçĕ минут иртсен пĕрлешме сĕннĕ теççĕ. Пĕр уявра курнă та зал урлă ун патне пырса: "Чунăм, эсĕ мана качча тухма хирĕç мар-и?" – тесе ыйтнă. Хĕрарăм кулса янă. Хăй çемьеллĕ кăна мар, унăн ача та пуррине каланă. Анчах арçынна чарман ку. Сăмах май, çамрăк амăшĕ 19-та кăна пулнă.

1936 çулта Джоанпа Али Парижра шавлă туй кĕрлеттернĕ. Унта Ага Хан та хутшăннă. Çемье çавăрнă арçын, чăн та, пусăрăнма пачах та шухăшламан. Тĕнче иккĕмĕш вăрçи вăхăтĕнче Али Çывăх Хĕвелтухăçĕнче Британи разведкинче хĕсметре пулнă. Разведчика мĕнле хĕр-хĕрарăм ан килĕштертĕр-ха? Информацие вăл чиперуксене ыталаса пухнă. Вĕсен шучĕ çĕртен те иртнĕ. Чиперуксен 90 проценчĕ сарă çÿçлĕ пулнă. Сăмах май, Али мăшăрĕ Джоан та – "саррисен" йышĕнчен.

Джоан – Алин пĕрремĕш арăмĕ. Вĕсен икĕ ывăл çуралнă. Аслă ывăлĕ Карим каярахпа тăваттăмĕш имам пулса тăнă.

### Çÿллĕ те, йăрăс та мар

Эрнест Хемингуэй ăна шăпах хĕрсен пуçĕсене çавăрма пĕлнĕшĕн кĕвĕçнĕ. Анчах та паллă çыравçă Алие пĕрремĕш хут курсан калаçайми пулса ларнă – вăл кĕтнĕ пек пулман хĕрарăмсен ăш çунтармăшĕ: йăрăс та мар, çÿллĕ те мар, пуçĕ те кукшаланса пырать...

Хемингуэй Али Хана Грета Гарбопа паллаштарнине çырса кăтартать. Пилĕк çул та пулин палламан арçынпа çак хĕрарăм ахаль чухне сăмах та чĕнсе калаçман. Анчах та



хальхинче... Кĕвĕ выляса кайсан Гретăпа Али ташша тухнă. Танго... Хĕрарăмпа арçын пичĕ çыпçăнсах ларнă. Виçĕ утăм малалла, виçĕ утăм каялла. Иккĕшĕ те никама та курмаççĕ...

Маргарет Тэтчерăн пĕрремĕш еркĕнĕ те Али пулнă теççĕ. Чăн та, Маргарет ун чухне политика çинчен шухăшламан та. Али хĕрарăма паркра уçăлса çÿреме çăмăллăнах ÿкĕте кĕртнĕ...

### Вăрттăнлăх

Çынсем Али вăрттăнлăхĕ пирки пуç ватнă – мĕнпе илĕртет-ха хĕрарăмсене çак арçын? Хэм палăртнă тăрăх, Али хĕрарăмсемпе хăть те мĕн чухлĕ савăшма пултарнă. Сăмах-юмаха ĕненес тĕк, вăл кашни ир ар хатĕрне ятарлă шывра, кĕрен тĕслĕскерте, тытнă-мĕн. Шывне вара тĕрлĕ-тĕрлĕ курăк хутăшĕнчен хатĕрленĕ имĕш. Тепĕр тĕрлĕ сăмах та пур. Али çамрăк чухнех ашшĕ хистенипе ятарлă тренинг "имсак" витĕр тухнă. Вăл Каир паллă тухтăрĕ Сулейман Бен-Тарак патне ултă эрне вĕренме çÿренĕ, ар хатĕрĕн тĕртĕмĕсене пăхăнтарса шĕвеке юхтарса кăлармасăрах киленÿ илме хăнăхнă. Ку вара арçын сывлăхне начар витĕм пачах та кÿмен... Шăпах çак пултарулăха пула Али тĕнчипех чапа тухнă та. Ун хыççăн журналистсем ура кĕлли çинех пусса тенĕ пек çÿренĕ – тата кам çакланатьха çак арçын капкăнне? Алишĕн вара харăсах виçĕ-тăватă хĕрарăмпа пурăнасси йĕркеллĕ шутланнă. Анчах та вăл çăмăл шухăшлă пикесемпе нихăçан та çыхланман. Ăна обществăра ят çĕнсе илнĕ, чыса-хисепе тивĕçнĕ хĕрарăмсем кăна илĕртнĕ.

### Пăрахакан тупăннă

...1948 çулта Европăра "Гильда" фильм модăна кĕнĕ. Тĕп рольте Америка актриси Рита Хейворт пулнă. Шăпах çак роль тĕнчипе чапа кăларнă хĕрарăма. Хиросима çине пăрахнă атом бомби çине те унăн сăнне ÿкернĕ тесе калаçаççĕ. Али çак фильма темиçе хутчен те пăхнă. Рита канăç паман ăна. Алипе тĕл пулнă çĕре актриса Орсон Уэллс режиссерпа уйрăлса ĕлкĕрнĕ. Хĕрарăм пĕчченлĕхре асапланнă. Алие вара шăпах Памела Черчилль, Англи премьерĕн Уинстон Черчилĕн тăван мар хĕрĕ, йăлăхтарса çитернĕ.

Çак вăхăтлла Алин конкурентсем те тупăннă – Голливуд актерĕсем тата шăпах унта канма пырса çитнĕ Иран шахĕ. Али пурне те хыçа хăварнă. Вăл хĕрарăма Парижа, Мадрида, Лондона çула тухма чĕннĕ. Кăмăлне çĕклес тĕллевпе Рита килĕшнĕ.

Шел те, çемье пурнăçĕ ăнман. Рита канлĕх, лăпкăлăх ыранă. Голливуд графикĕ ăна йăлăхтарса çитернĕ. Алипе пĕрле тĕнчерен пытанса пурăнас килнĕ унăн. Али вара пурнăç йĕркине улăштарас темен – хăйĕн йĕри-тавра яланах çын пулнине хăнăхнă вăл. Пĕр вырăнта тăрайман арçын, яланах ăçта та пулин васкамалла пулнă унăн. Рита хĕрĕпе Ясминпа Америкăна таврăннă. Али Хана пăрахнă пĕрремĕш хĕрарăм пулнă вăл. Официаллă майпа вĕсем 1953 çулта уйрăлнă.

### Тавăрнă

Али каллех малтанхи пек пурăнма пуçланă. Вăл пĕр çĕршывран теприне вĕçнĕ самолетпе. Çитменнине, пĕринче те темиçе сехетрен ытла тытăнса тăман. Хăй чăрăннă хуласенче Али чаплă хăна çурчĕсенчен тухса та курман. Али пултарулăхĕ пирки чап çав тери анлă сарăлнă – унпа вырăн пĕр хутчен те пулин ăшăтса курман хĕрарăм пурнăçран юлнă шутланнă! Чиперуксене çакă тивĕçтернĕ. Джульетт Греко уншăн канăçне çухатнă. Ким Новак Али хыççăн ытти арçынсене чĕрĕ вилесемпе танлаштарнă. Джин Тьерни, ун пирки йăлтах пĕлет пулин те, ăна качча тухма ĕмĕтленнĕ.

Чи паллă хутшăну Тельма Фернес ледипе çыхăннă. Тельма Алипе паллашиччен Уэльский принцăн мăшăрĕ пулнă. Анчах та Али Хана курсанах пуçне çухатнă. Чăн та, принц ку вăхăтлла нумаях пулмасть упăшкинчен уйрăлнă Уоллис Симпсон американкăпа паллашнă. Уншăн вăл каярахпа хăй ирĕкĕпе Англи тронĕпе те сыв пуллашнă.

"Хĕрарăмпа тĕл пулсан эпĕ яланах чи малтан ăна киленÿ кÿресси çинчен шухăшлатăп", – тенĕ Али. "Пĕррехинче мана "хура ÿтлĕскер" тесе ылханчĕç, – ку та Али сăмахĕсемех. – Эпĕ вĕсене çакăншăн тавăртăм: вĕсен мĕнпур хĕрарăмне туртса илтĕм".






## И-ХИ-ХИК

Пĕчĕк арçын ача киле макăрса чупса кĕрет.

– Мĕн пулчĕ-ха, ывăлăм? – шеллет амăшĕ.

– Аттепе пĕрле пулла кайнăччĕ, – ĕсĕкле-ĕсĕкле каласа кăтартать шăпăрлан. – Унăн вăлтине питĕ пысăкки çакланчĕ. Атте кăларас тесе туртрĕ-туртрĕ те вăлти хуçăлса кайрĕ... Пулли вара тарчĕ.

– Çавăншăн макăраççĕ-и вара? – тет хĕрарăм. – Кулса кăна ирттерсе ямаллаччĕ.

– Эпĕ те култăм çав!!!

* * *

– Мĕншĕн çиместĕн эсĕ? – ыйтать амăшĕ ывăлĕнчен. – Кашкăр пекех выçă терĕн вĕт...

– Анне, кашкăр кишĕр çинине ăçта курнă-ха эсĕ?

* * *

– Çăкăрпа çи апата!

– Анчах çăкăр юратмастăп эпĕ.

– Çăкăр çимелле – усăллă вăл.

– Мĕнпе усăллă-ха?

– Ăна çисен вăйлă та сывлăхлă пулатăн. Вара ÿссе çитсе хăна вали çăкăр туянмалăх ĕçлесе илме пултарăн.

– Анчах çăкăр юратмастăп эпĕ!

* * *

"Кĕркунне çитрĕ. Çумăр тумламĕсем чÿречерен шаккаса чунри тунсăха вăйлатаççĕ. Çил аманнă кашкăр евĕр улать. Тÿпе те макăрать. Калăн, пĕчĕк ача... Çакăн пек çанталăкра ăшă утиял айне тата шаларах кĕрсе выртас килет..."

– Петров! Ĕçе кая юлса килнин сăлтавне кăсăклă ăнлантаратăн эсĕ.

* * *

– Командăра ĕçлемелле тенине мĕнле ăнлантаратăн эсĕ?

– Ну-у... Мĕн те пулин ăнăçмасан тÿрех урăххисем çине йăвантарма пулать.

* * *

Шкап евĕр арçын кафене ĕçе вырнаçма пынă.

– Йĕркелĕхе асăрхакан кирлĕ-и сире? – ыйтать хайхи барменран.

– Паллах, кирлĕ, анчах та сирĕн квалификацие пĕлместпĕр эпир.

– Халех кăтартатăп, – тĕреклĕ арçын алă айне лекнĕ çынна ярса илет те чÿречерен кăларса ывăтать. – Мĕнле пек?

– Тем каламалла ĕнтĕ?.. Акă директор каялла кĕрĕ те сирĕнпе ĕç пирки хăех калаçĕ.

* * *

– Профессипе кам-ха эсир? – ыйтаççĕ ĕçе вырнаçма пынă çынран.

– Шурă тата хура бухгалтери магистрĕ.

* * *

– Ывăлăм, мĕнле унта экзаменсем?

– Хаксем ÿсрĕç, атте.

* * *

Ĕç коллективне лектор пынă. Докладне вĕçлесен хайхи пухăннисенчен ыйтать:

– Сирĕн ман пата ыйтусем пур-и?

– Пур. Трибуна çинчи стакан текех кирлĕ мар-и сире?

* * *

Экзамен. Студент хуравламашкăн пĕчĕк хут таткипе тухать. Унта кĕске темиçе предложени çырнă.

– Мĕн ку?

– Манăн хурав.

– Çакăн чухлĕ кăна-и?

– Ытти йăлтах – пуçра. Кунта – пуçа шăнăçманни кăна.

* * *

Ташă каçĕнче майĕпен кĕвĕ янăранă май пикене чĕнсе кăларнă каччă кĕтмен çĕртен персе анать.

– Шыв! Шыв парăр хăвăртрах! – кăшкăрать хăраса ÿкнĕ хĕр.

– Тата... çăкăр... – хăрах куçне аран-аран уçать студент.

* * *

Чикан майри каччă ывăç тупанĕ тăрăх юмăç пăхать.

– 45 çулччен санăн укçа пулмĕ.

– Кайран... Кайран вара мана мĕн кĕтет?

– Кайран-и? Кайран укçасăр пурăнма та хăнăхатăн.

* * *

Экзамен хыççăн икĕ студент тĕл пулнă.

– Миçелĕх тытрăн?

– "Виççĕлĕх". Малтан "пиллĕклĕх" тесе палăртнăччĕ. Кайран шухăшларăм та – мĕн тăвас-ха манăн "пиллĕкпе"? "Виççĕ" çитет тесе шухăшларăм та юлнă укçипе сăра туянтăм.

* * *

– Вĕренме кĕнĕ чухне пĕр вырăна 6 çын нумай пек туйăннăччĕ. Нумай мĕнне каярахпа, ĕçе вырнаçнă чух, ăнлантăм – 50 пин евро...

* * *

Манăн кушак аçи хăйĕн кăмăлсăрлăхне тĕрлĕ санкци урлă кăтартать...

* * *

– Эсĕ мĕншĕн уруна сĕтĕрсе утатăн?

– Пĕр хăнăхнă та...

– ???

– Пĕлетĕн-и: вăт килте çĕрле тăратăн та тĕттĕмре уруна сĕтĕрсе утатăн. Кушака тапни унăн хÿри çине пусса лартнинчен хăрушсăртарах...

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 8-967-470-46-77.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 8-967-470-46-77.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 89603016374.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 8-903-358-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**15.Кирпич, кольца.** Т. 89613393363.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**48.Керамблоки; все для фундамента** – ФБС, бой кирпича, бетона, сваи, ОПГС, песок. Доставка. Т. 8-906-381-44-20.

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, **песок,** керамзит, **бетон,** чернозём, **навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 8-902-327-75-85.

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**685.ТРОТУАРНУЮ ПЛИТКУ, брусчатку** – дёшево. Распродажа. Доставка. Укладка. Т. 89033220479.

**686.Песок, щебень, гравмассу; вывоз** мусора. Т. 8-903-322-04-79.

**687.Профнастил, металлочерепицу, водостоки.** Скидки. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**115.Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80. *Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**513.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**688.Кровельные, фасадные работы.** Гарантия. Т. 8-903-322-04-79.

**716.Окна, двери, мебель.** Т. 8-987-576-92-32.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ĔÇ РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

## КĂСĂКЛĂ!

- XVIII ĕмĕрте Англире ананас пуянлăх палли шутланнă. Уяв йĕркелекенсем хăйсем чухăн маррине кăтартассишĕн çак çимĕçе часчасах... тара илнĕ.
- Авокадо идеал çимĕç шутланать, мĕншĕн тесен унра организма кирлĕ мĕн пур витаминпа минерал пур. Çав шутрах – протеин та.
- Чи йÿçĕ улма-çырларан пĕринче – лимонра – сахăр пылак çĕр çырлинчен те нумайрах.
- Кăнтăр Мексикăра, Гватемалăра "хура сапота" ятлă улма-çырла ÿсет. Ăна урăхла хура хурма, шăккалат хурма, хура панулми тесе те калаççĕ. Тутипе вăл шăккалат кекса аса илтерет. Анчах унра çусем çук. Вăл С витаминпа пуян, апельсинрипе танлаштарсан – 4 хут ытларах.
- Шимпанзе амисем улма-çырла илсе пыракан аçасемпе çеç хутшăнаççĕ. Вăл та йывăç çинчен татни мар, çынсенчен вăрлани пулмалла. Çакна епле тавçăраççĕ? Хальлĕхе паллă мар.



« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службине 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи"** рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7949. Заказ 4269.